К С(Чув)
Ю41
3100 64-чув

Геннадий Юмарт

# Кĕмĕл алтăр

Сăвăсем

калавсем

ГЕННАДИЙ ЮМАРТ ☆ КĔМĔЛ АЛТĂР

ШУПАШКАР
ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1988



Геннадий Юмарт (Геннадий Федорович Трофимов) 1938 çулта çуралнă. Пединститутран вĕренсе тухнă хыççăн учительте, Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçленĕ. 1970 çултанпа вăл — Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн сотрудникĕ. Унăн çакăн пек сăвă кĕнекисем тухнă: «Тивĕç» (1969), «Курак тăманĕ» (1971), «Керменкке» (1979), «Друзья Нарспи» (1980), «Тĕрек» (1983), «Родное гнездо» (1987). Г. Юмарт тăван поэзи, фольклор тата куçару ыйтăвĕсемпе чылай статья çырнă.

# ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

# Кĕмĕл алтăр

Сăвăсем, куçарусем

ББК 84 Чув. 7—5
Ю 41

Кĕнекене *Э. М. Юрьев* илемлетнĕ

31064-чув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

**Юмарт Г. Ф.**
Ю 41 Кĕмĕл алтăр. Сăвăсем, куçарусем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988.— 143 с.

Этем тивĕçĕ, чун пуянлăхĕ, тăван культура еткерĕ, халăхсен туслăхĕ, сивĕнми юрату — акă мĕн-мĕн çинчен шухăшлать сăвăç. Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче куçарусем пичетленеççĕ.

ББК 84 Чув. 7—5

Ю $\frac{4802010200-041}{М\ 136(03)-88}$ 49—88

ISBN 5—7670—0042—5

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1988 ç.

# ÇĂВĂТЕМ

## ТУПА

*Виталий Юмарта*

Эп тупрăм, тупрăм вăй-хăват
Татмашкăн тунсăх мăйкăчне.
Чĕрем çĕн юрă халь хывать,
Курса малашлăх çутине.
Эпир вăл, тусăм, çав çутта,
Ун ăшшине çывхартакан.
Сулмаклатар эппин утта,
Вут саптăр урари такан.
Пире çуратнă тĕнчене
Чи аслă ĕмĕтшĕн çунма.
Тек ăнтăлма малаш енне
Чараймĕ ним те чунăма.

Эй, тусăм, тусăм! Вирлĕрех
Янратăр пирĕн вут чĕлхе!
Вăл тивĕç пултăр тĕнчере
Хальччен курман хисеплĕхе.
Эпир вăл Çеçпĕл кăварне
Тĕнче тавра салатакан.
Тăван поэзи авăрне
Яланлăх чăмрăм паянтан —
Татах илемлĕн те ачаш

Шăрантарма тăван юрра.
Унра ман чунăм, ман малаш,
Мала чĕнен йыхрав — унра...

Эй, тусăм, эп Атăлпала —
Ун чунĕпе, хăвачĕпе —
Халь тăванлатрăм кăмăла,
Тупа туса ун ячĕпе.

* * *

Паян эп хам — кĕсле-гитара,
Паян эп — тăвăнса çитсе,
Çинçен-çинçен те антăхуллăн
Ун хĕлĕхĕ чĕтреннĕ сас.
Эп хам — çил чĕлтĕрти юр витĕр
Хирти шап-шур тӳремлĕхре
Ирĕклĕхе туйса çĕкленнĕ
Хĕрӳллĕ çепĕç сас. Çăлкуç
Шаркавĕ, çулçăсем ачашшăн
Пăшăлтатни те — эпĕ хам,
Ман чун, ман чĕрĕ чун янравĕ.
Çак çĕр çинче кашни этем
Теприншĕн килнине сăмахсăр,
Чунпа туйни юрра куçать,
Вăл — манăн киленӳллĕ ĕçĕм...
Эп витĕрех — кĕсле-гитара,
Ун чĕрĕ кĕввинчен хĕвел
Çутин пайăркине куçатăп,
Пулатăп унăн сар шевли.

## МАН АСАТТЕ

*В. Туркая*

Чечек хуратпăр Яковлев умне.
Вăл пирĕншĕн — чăн-чăн мăн асатте.
Пăхатăн та ун кӳлепи çине,
Ялан хĕвшухăш сас парать пирте:

«Тертпе çĕкленнĕ санăн ĕç-хĕлӳ
Асилтерет чи аслă тĕллеве.
Чăвашшăн эсĕ кӳтĕн Çĕнелӳ,
Ёмĕртенхи хавал юлман кивве.

Чăвашшăн çеç-и — кӳршĕ халăхсен
Асне те чĕртрĕн тĕттĕм вăхăтра.
Çуталчĕ те малашлăхĕ вĕсен,
Яту ян янăрать тĕнче тавра».

## ЮЛАШКИ ÇЫРУ

«Уйăх иртрĕ. Шатăр шартлама.
Тӳр килмерĕ ăшăнса курма.

Вăрманта тăратпăр ирĕн-каçăн.
Пӳрнесем кӳтеççĕ, шыçăнаççĕ.

Тапăнса килет фашист шавах —
Çавăрса илесшĕн Мускава.

Çунĕ, ванĕ вырăсан вăрманĕ —
Пурĕпĕр тăшман ӳксе йăванĕ.

Хăвăрах пĕлетĕр пуль, Анук:
Каялла чакмашкăн вырăн çук.

Хамăртан ӳтленнĕ çĕнĕ чун
Курчĕ пулĕ ĕнтĕ çутă кун.

Тĕмсĕлет пепке тытасшăн аллăм.
Унăн вырăнне алра — пăшалăм.

Çакăнтан ытла мĕскер калам.
Пурсăра та йĕркипех салам!..»

Хурăнташĕ, пĕтĕм кӳршĕ-аршă...
Ялйышран кам çеç кунта çук мар-ши?

Урăх, тен, çырма тӳр килмесрен
Асăннă пурне те ятсерен.

Юлашки çыру — салтак пехилĕ:
Сывă пултăр çĕрĕ-шывĕ, килĕ;

Çитĕнтĕр чун татăкĕ — ачи,
Ешĕллентĕр уй-хирте калчи...

Пепкӳнтен пепкеллĕ пултăм, хуньăм.
Пехилӳ çитни — хальхи ыр кунăм.

Эсĕ ху сывах юлайманран
Çичĕ хут вăл хаклă ылтăнран.

Арăн хӳтлĕхне мăшру туймарĕ,
Ашшĕ ăшшине ачу курмарĕ.

Чул çинче ӳсен чечек пекех
Çитĕнчĕ чунри илем, тĕрек...

Юлашки çыру — салтак пехилĕ:
Вăл çитсессĕн, тăнăç пурнăç килĕ.

Унсăр сӳнĕ килӳнти вучах,
Пурнăç та хăрса ларать пачах.

Паллă мар çĕрте тăпру выртсан та,
Манăçмĕ ĕçӳ, салтак, нихçан та.

## ЭРИНЕ ХĔРĔМЕ

Килсем, килсем! Яр-уçă саншăн
Пин-пин сас-чĕвĕллĕ тĕнче.
Сана хальччен мĕн чул кĕтмен-ши
Килте, ĕçре те çул çинче.

Килсем, килсем! Пиртен халаллă
Куçу тулли эреш-илем.
Ăна савса ăша илмелĕх
Чĕр сисĕм те сана пиллем.

Килсем, килсем! Йышран юлмасăр
Иртинччĕ санăн ĕмĕрӳ:
Вĕри çăлкуç пекех вĕретĕр,
Чечек пек йăмăхтăр хĕрӳ!

Телейӳнте эпир куратпăр
Кунçулăн сумлă тăсăмне.
Тен, эсĕ кӳрĕн чăн пĕлтерĕш
Алри ĕç-хĕлĕм тупсăмне.

Шăпах та эсĕ, тен, çитерĕн
Çитсех пĕтмен ĕмĕтĕме.
Ыр тусăм евĕр çирĕп шанчăк
Эс пул çынсен чунне чĕртме.

Телей тени килеймĕ тертсĕр,
Тертне кура сунам термен,
Чи хăрушши кăна ан çиттĕр —
Вутра ан çунтăрччĕ кермен.

Çав тĕллевпе ĕçре хĕретпĕр,
Упратпăр ыр тĕреклĕхе.
Ахальтен мар сивлет çĕршывăм
Вăр-хурахла сĕмсĕрлĕхе.

## ЧĔРĔЛНĔ!

Илтрĕр-и те куртăр-и?
Ял хĕрринче ир-ирех
Сар хĕвеллĕ тӳпере:
— Тăрăр! Тăрăр! — тет тăри.—
Тухăр, тухăр хăвăртрах!
Çĕр вăраннă вăхăтра
Пăчăхса-и лармалла?
Тапăр сикĕр тулалла —
Уй-хире те çарана.
Сăнасамăр таврана:
Ларнă-мĕн çӳçе кăчка,
Куç уçать патвар папка.
Пурçăн курăк ешерет,
Ĕнтĕ çĕр шăрши кĕрет.
Çитрĕ, çитрĕ кĕтнĕ кун:
Шуйланать мĕнпур чĕрчун.
Çеремре, уяври пек,
Сиккелет пăру-путек.
Çутçанталăк чĕрĕлнĕ!
Çутнă чĕрлĕх хĕвелне!
Савăнса выля та кул,
Ĕç тĕлне те пĕлнĕ пул.

# САКСУК

Анне каларĕ:
«Тухса кай,—терĕ,—
Çут тĕнчелĕхре
Саксук пул»,— терĕ...

*Халăх юрринчен*

Уй-хирпе иртсе пыруçăн
Е вăрман çывăхĕнче
Тăлăх кайăк курăнсассăн
Пăралук-юпа çинче,
Саксука аса илетĕп,
Қалаçатăп ăшăмра:
«Эс çаплах иккен çӳретĕн
Қилсĕр-çуртсăр, аякра.
Тепĕр хут этем пулмашкăн
Қаçару çитмерĕ-им?
Тăван мар аннӳ ӳпкевĕ
Сирĕлсе каймарĕ-им?
Демон пек çӳрен пĕчченçĕ
Шăрăхра та сивĕре...»
Эрлĕк сасă çеç салхуллăн
Илтĕнет пек инçетре...

Савнă халăхăн ылханĕ
Ан витейтĕрччĕ тесе,
Хытарать хăйне ман чунăм,
Систерет пек тивĕçе.

# ЕТКЕР

*А. Тарасова*

— Еткер, еткер теесçĕ.
Мĕскер-ха вăл еткер?
Е тутлă кучченеç-и,
Е юрă евĕрскер?—

Çапла тĕпчерĕ хĕрĕм
Пĕррехинче манран.
Тĕплех кала пĕлмерĕм,—
Хальччен илтмен, курман.

— Епле курман пулайтăр?—
Тет асанне пире.—
Мĕнпе эсир пуятăр?
Мĕн ăс парать сире?

Мĕнрен килет тĕрекĕр?
Мĕскер имлет чуна?
Мĕнпе кĕрлет кĕрекĕр?
Мĕн эрешлет ăна?

Атте-аннемĕр килĕ,
Ăс-хакăлĕ, юрри,
Ян-ян чĕлхи те пилĕ,
Асамат пек тĕрри.

Сăваплă çак пуянлăх —
Ак вăл мĕскер еткер!
Упрантăр вăл яланлăх,
Ан сапала — ӳстер.

Ӳсмест йăмра тымарсăр.
Еткер те вăл — тымар.
Тымар кайсассăн харсăр,
Турат та хăрăк мар.

## МИТТА ВАÇЛЕЙĔН ВИЛТАПРИ УМĔНЧЕ

Ял айккинчи масар тавра
Сăрланă симĕсрех карта.
Çӳл йывăç кӳнĕ сулхăнра
Ҫанать илем ăсти Митта.

Чие, виç хурăн та сирень
Çĕкленнĕ ĕнтĕ сарăлса.
Чул юпари ӳкерчĕкрен
Пуç тайрĕ сăвăç йăл кулса.

Хăйне карта. Лармашкăн — сак.
Чечеклĕ савăтсем, йăран.
Эс, поэта кусран пăхса,
Пуплетĕн, вăрахчен тăран...

Тăван чĕлхемĕр чысĕнче
Эс куртăн аслă тивĕçе.
Хресчен пек пултăн йыш çинче,
Сăваплăх кӳтĕн çав ĕçе.

Пĕччен тăрса юлсассăн та,
Ҫайсассăн та вăйран-халтан,
Шăратрăн сăвă чунунта,
Пĕр уншăн тăтăн чи малтан,

Чăваш хавалĕн управçи,
Илемлĕ ăс кĕвелĕкĕ,
Эс пирĕн тертлĕ çул уççи,
Эс юлмăн сулхăн тĕлĕке.

Сахал-и тантăш-шăллусем,
Йăмăкусем те çав йышпа
Мал ĕмĕчĕ илĕртнĕçем
Утаççĕ санăн çуттупа.

Ахаль-и тăтăш сан патна
Килетпĕр кăмăл юрттипе.
Таса металл пек сăввуна
Вулас килет чун туртнипе.

Ивановла та çеçпĕлле
Ян-ян йыхрав чĕнет пире:
Ан юл, чăваш, чунна çĕкле,
Ятна ан çĕрт, тăн-тăн çӳре!

Хунавлă Пăлаçи, тавах!
Эппин, сăпайлă вилтăпри
Пехиллĕ пултăр-и шавах,
Ялан хисеплĕ тăтăр-и?

## РАИСА ФЕДОРОВА
## АКТРИСĂНА

Сан чӳречӳ умĕнче
Çĕмĕрт шур чатăр пĕркеннĕ.
Унăн чечен тĕрринче
Сан сăнару эрешленнĕ.

Чирлĕ выртать-и аннӳ,
Вырăн çинчен тăраймасăр,
Шанчăклă тенĕ çынну
Иртрĕ-и ним уямасăр —

Сулхăн çанталăк чухне
Ашăтĕ лăпкă йăл кулă;
Сан чун-чĕрӳ хуйхине
Палăртмĕ вăл нăйкăшуллă.

Ху кӳрекен пархатар
Кӳтĕр хăвна та йăпанăç.
Сан сассунта сахал мар
Куртăм хĕвеллĕ савнăç.

Камшăн — илемлĕх турри,
Камшăн ĕçчен ырă амăш —
Çак тĕнчере эс пурри,
Санăн ултавсăр хăтланăш.

Çитĕнтĕн кӳршĕ ялта,
Пĕр ӳсĕмрех çунăхатăн.
Çавăн пирки-ши тата,
Чăн тăван пек туйăнатăн.

Вăрçă хирсен те пире,
Тапрĕ илемĕн çăлкуçĕ.
Хӳхĕммĕн ӳсрĕ чĕре,
Ташă та вăйă çул уçĕ.

Ĕнтĕ манран çӳлерех
Санăн сăваплăх çĕклемĕ.
Эс урамра е ĕçре —
Çынлăх, хитрелĕх элемĕ.

Кĕтнĕ хĕр-тус кăмăлне
Сан сассунта асăрхарăм.
Драма вылянă чухне
Пултăн эс паттăр хĕрарăм.

Чун илемне кăтартма
Çепĕçлĕх çеç-и пит кирлĕ?
Тивĕçлĕрен хăтăрма
Хурçă пек тăрăн эс вирлĕ.

Халăхăм пӳрнĕ илем
Халăхшăн йăлтăр çуталĕ.
Чĕрлĕх чĕртен вут-хĕлхем
Мĕншĕн-ха уссăр çухалĕ?..

# ЮПА МЫСКАРИ

*Г. Айхие*

Шавлать, янăрать акатуй.
Вăййи те кулли — шуй та çуй.

Тăратнă çӳ-ӳллĕ юпа.
Юпа тăрринче упа.

Чăн-чăн упа мар — тетте.
Тетте-пукане пит çӳлте!

Тукмак урисем чармак.
Пултар-ха çĕре антарма!

Юпи кутĕнче шăй та шай.
Пыма та май çук — ай-яй-яй!

Çӳле улăхасшăн иккен,
Парнеллĕ пуласшăн иккен.

Анчах та — илмешкĕн асап.
Лекеймĕ парне талпаса.

Пикенчĕç илме темиçен,
Пиçмерĕ вĕсен, мĕскĕнсен:

Пĕри çитеймест тăррине,
Тепри çитейместваррине.

Пулин хăйсем вăйпитти,
Çĕртен хăпаймарĕ ытти.

Вĕсем нимĕн уссăр ансан,
Пĕр шĕвĕр ак тухрĕ састан:



Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького

Ун çирĕп алли вăр-вар,
Ури çат тытать, патвар.

Пакша пек хăпарчĕ хайхи,
Ши! кайрĕ — пулмарĕ хуйхи.

Хăçан пухнă-ши вăй-халне?
Қамран илнĕ-ши ăс-мелне?

Қурса ĕненмест, ав, пĕри,
Пăхса тĕлĕнет, ав, тепри.

## УЙРАЛУ

*Юмах*

Сар йĕкĕтпе сар хĕр туслашнă
Пĕрле пуласшăн ĕмĕрех.
Сар йĕкĕтпе сар хĕр туслашнă,
Қалать, тет, йĕкĕт сар хĕре:
— Шур акăш пек кермен лартар-и
Кĕленчерен те кĕмĕлтен?
Шур акăш пек кермен лартар-и?—
Татах та савăк пулĕ, тен...
Қалать пике вара хавассăн:
— Тĕнче ахаль те чăп-чăпар.
Çук, çук, савни пĕрле пулсассăн,
Мана тек ним те кирлĕ мар.
Қалать, тет, йĕкĕт:— Ӳстерер-и
Парка çеçкеллĕ йывăççем?
Қалать, тет, йĕкĕт:— Ӳстерер-и?
Иленччĕр çепĕç кайăксем...
Қалать пике вара хавассăн:
— Қуçран куçа пăхса ларар.

Çук, çук, савни умра пулсассăн,
Мана тек ним те кирлĕ мар.
Хĕре сар йĕкĕт ӳкĕтленĕ:
— Акар-и хӳхĕм чечексем?—
Хĕре сар йĕкĕт ӳкĕтленĕ:—
Иленччĕр сарă лĕпĕшсем.
Калать пике вара хавассăн:
— Ăçтаваскан — савнар-выляр,
Çук, çук, савни çумра пулсассăн,
Мана тек ним те кирлĕ мар.
Чĕнмен, тет, сарă йĕкĕт урăх,
Салхуллăн утнă уйрăлса.
Чĕнмен, тет, сарă йĕкĕт урăх,
Çухалнă, тет, таçта кайса.

# ЧӖКЕҪ

Чӗкеҫ пуҫне ҫу сӗрсе
ярсан, телей пулать, теҫҫӗ.

*Халӑх ӗненӗвӗ*

Шӑрӑх. Пӑчӑ. Уҫӑ чӳрече.
Ансӑртран тем ярӑнчӗ те кӗчӗ,
Ҫапӑнчӗ те ӳкрӗ урайне.
Ах, чӗкеҫ иккен, сӑваплӑ кайӑк!
Те аманчӗ — тем кӑштӑртатать,
Шукаларӗ хӑй — ҫӗкленеймерӗ.
Пытӑм, тытрӑм йӑпӑрккаскере.
Ҫунатти ҫыхланнӑ та — тӳрлетрӗм,
Ятӑм — тулалла вӑл вирхӗнчӗ,
Чу-у! кайса ҫухалчӗ куҫӑмран...
Акӑ халь ҫӑвар карса тӑратӑп:
Ҫу та сӗреймерӗм ун пуҫне,
Ҫӑкӑр тӗпретсе те параймарӑм.
Чӑнахах, ӑҫтан ӗҫ-пуҫ ӑнас?
Шав кайран кӑна ӑса кӗретӗн,
Вӗҫертен алри ӑраскална...

Ай, мӗн-ма шеллес, тепӗр тесен,
Сӑй тумасӑр янӑ чӗкеҫе?
Ытлӑ-ситлӗ ырлӑх пит кирлех-ши?
Телейӳ алра чухне вара
Сан чунна мӗн хӗтӗртӗ хӗрмешкӗн?

## ПИХАМПАР ЧЕЧЕКĔ

Çитĕнет карта пек çӳллĕ,
Тунари папкасерен
Ун вуншар чечек те пулĕ.
Тĕсĕсем ун тĕрлĕрен:
Хĕрлĕрен шурра куçаççĕ —
Е шăлан пек шупкарах,
Мăкăнь пек те йăмăхаççĕ,
Хăй патвар çав хушăрах.
Çирĕпленнĕ ун тĕрекĕ
Хир-çаранăн ĕмĕртен.
Ун тачка туни, чечекĕ
Шикленмест сивлек çилтен.
Çĕр çыннин алли те сăнĕ
Сисĕнет ун тĕсĕнче.
Ахаль мар ӳссе хунанă
Чи таса масар çинче.

## ХУРАҪКА

Куллен миҫе пырса пăхать-ши алăка?
Кĕресшĕн ăнтăлать те пĕр авка
Айкка кайса выртать... Каять-килет
Больница машини — вăрҫса илет:
Йытă, калăн, хăратать ăна —
Вĕрет-вĕрет, пĕлмест хăй лăплана.
Унтан каллех пĕр тапхăр шăпланать,
Тем хаш сывлать, тен, асăнать:
«Килеҫҫĕ, пурăнаҫҫĕ те ҫынсем,
Каяҫҫĕ сывалса кунтан вĕсем.
Эс пур хĕллеренпе кĕтсе тăран,
Паян ҫырла шăрши килет садран —
Хуҫам тухса курмарĕ халĕ те,
Утмашкăн ҫук-им вăйĕ-халĕ те.
Кĕрсе йăпатăттăм — шала иртме хушман.
Ах, хăҫанччен кĕтмешкĕн тивĕ ман?
Ҫич хут та лайăхчĕ тăван килте:
Таҫта автанĕ халь, путекĕ те...
Ҫак ҫурт халь маншăн килĕм шутĕнче.
Йăва пек хўтлĕхре, ун леш енче,
Тăват чипер ача кун курчĕҫ ман.
Таҫта ҫухалчĕҫ иккĕш куҫăмран.
Пĕри, хам евĕр тикĕт тĕслĕскер,
Сарашкапа вылятчĕ чип-чипер —
Таҫтан-муртан больница машини
Сасартăк пулчĕ кăшкăртса яни —
Ун урапи айне лекейрĕ те
Тек тăраймарĕ — пĕтрĕ ҫав тĕлтех.
Ах, шăл витес пулсассăн, чунсăра
Туртса эп ҫурăттăмччĕ туххăмра!
Хам лутрашка та лăпкă пулнăран
Кушак ҫури те ҫакăнать майран,
Тек-тек вылясшăн мăнтăр сарашкам,
Йăлăхтарать, ҫыртасчĕ — хам ачам.

Асилтерет вăл кӳршĕ-тусăма:
Ун тĕсĕ те çапла... Ана курма
Хăçан тӳр килĕ ĕнтĕ çĕнĕрен?
Мучи хăçан-ши тухĕ пӳлĕмрен...»
Хуçи куç хупнă, тет-мĕн, тахçанах,
Йыт сисиччен ăсатнă, тет, ăна.

## ПИЛЕШ ТАТАТАП

Юр ӳкрĕ. Сивĕтет. Пилеш тататăп.
Қаçар, пилеш! Сана, тен, амантатăп:
Тураттусем кӳреннĕ чунпала-ши
Унтан-кунтан тăк-тăк!— ай!— чышкалаççĕ.
Эппин, пулам татах асăрхануллă.

Çырлу тăртаннă калама çук тулăх:
Шăрça пекех яка та çутă хĕрлĕ,—
Анранипе ман ӳкес мар пусхĕрлĕ.
Çупкам çумне çупкам ӳссе çыхланнă —
Чĕп-чĕрĕ фейерверк пек ярăмланнă.
Эппин, çитес çулта хирти тырпулă
Умри пилеш пек ытлă-çитлĕ пулĕ...

Пăхма хитре пилешĕм, йӳçĕскерĕм!..
Çапла юрланине-çке асилейрĕм.
Тутли-йӳççи санри пекех пĕр шайăн
Курма тивет çынна кун иртнĕ майăн.
Ай-хай, йӳççи пачах та тутанмасăр
Кунçул иртейĕ тутăсăр-масасăр...

Ак тулчĕ ĕнтĕ темиçе витре те.
Çитет, çитет. Халь килелле кĕретĕп.
Турат çинче çырла кăшт-кашт юлайтăр:
Унпа ыр тусăм — уйăп сăйланайтăр.

Йлемшĕн хăварни те пулмĕ пăсăк,
Иртен-çӳренĕн кăмăлĕшĕн — кăсăк...

Асаттесем пилеш вăйне ĕненнĕ:
Тураттипе усалсене хĕненĕ.
Вĕсен йăлишĕн, сых ятне темелĕх,
Турат хуçса илес килет пĕтевлĕх.

## ШЕЛЛЕҪЕНСЕМ

Шеллеместĕн эс хăвна та —
Темшĕн те пăшăрханатăн:
Çын кукри-макрисене те
Тӳрлетесшĕн хĕрĕнетĕн.
Çын ултавлă ĕç тунишĕн
Ытлашши çĕклем ан йышăн.
Аллунти ĕçӳ, ав, санăн
Ҫупипех, асту, капланнă.
Ҫут хĕссе кăна ларасчĕ,
Тав-шавран инçе пуласчĕ...
Хăшĕсем çапла сунаççĕ,
Манăн сывлăхшăн çунаççĕ.
Эй, туссем! Сире кĕтсеттĕм —
Йăх-яха сирме чĕнсеттĕм.
Çӳп-çапа сирсе пыран-и —
Чун-чĕрӳ те ылтăнланĕ...
Ах, хитре иккен сăмахăр!
Хăвăра шеллетĕр, ахăр.

# УРТĂШ ЙЫВĂÇ, УРТĂШ ҪАЙĂК

Уртăш йывăç, уртăш кайăк...
Асăмра ялан тăратăр
Юмахри ĕлккен сăнарлă.
Хырлăх-чăрăшлăхăн айĕ
Пуш-пушах ан лартăр тенĕн
Çитĕнетĕн, уртăш, эсĕ.
Ĕмĕрхи тăван асамлăх
Сисĕнет санра ачашшăн.
Ҫăнтăрти çӳл кипарисăн
Хамăрла чăн ячĕ уртăш
Пулнă мар-ши несĕлсемшĕн?
Авалхи кунçул пĕтевĕ
Вырăннех сана картатăп.
Шухăшăм вĕçет хăлатăн
Ҫавказри ту-чакăл çийĕн.
Мăн кĕрӳ такмакĕ сансăр
Ҫичемленĕ, чухăнланĕ:
Амăрткайăка лармашкăн
Эсĕ чи ятуллă йывăç.

Ахаль мар хăв кайăку та
Манăçман, пин çул иртсен те,
Халь кунта хăй çук пулин те.
Ахаль мар хальччен упраннă
Юрăра ун ырă ячĕ
Акăшпа пĕрле пĕр чыслăн.
Ҫулленхи илем эрешĕ
Çакăнта йĕрленнĕ мар-и?
Черченкке пек туйăнсан та,
Уртăш кайăк чунĕ çирĕп,
Хăйсене çунат хушмашкăн
Амăшне шав аптратаççĕ —
Çулăмра çунма тивсен те,

Шыв тĕпне путма пӳрсен те,
Çын çитен çĕре çитесшĕн,
Çын куран терте курасшăн.
«Уртăш кайăк» тенĕ юррăн
Пур-тăр тупсăмĕ татах та.
Харсăр кайăкăн сăнарĕ
Асăмран çапах çухалмĕ:
Паттăрлăхпала хитрелĕх
Шайлашса унра вăй илнĕ.
Асамат кĕперĕ евĕр
Çич тĕспе тĕкленнĕ кайăк
Қăмăла шавах çутатĕ,
Илеме çеç илентерĕ.

Халсăр çын-и е уксах-и —
Вĕсене эс, уртăш тусăм,
Сахал мар туя пиллерĕн.
Йăлăмра çӳренĕ майăн,
Хам ырса çитсен те, эсĕ
Тĕренме турат сĕнеттĕн.
Латышсем патне кайсассăн,
Пĕр маттур туя курсаттăм.
Нимсĕрех чапа тухман вăл:
Халăх юррине пухмашкăн
Вăл тĕрев пулса çӳренĕ
Сумлă çыншăн ял-ял витĕр.
Халь пин-пин çав ĕнчĕ-юрă —
Халăх пурлăхĕ, мухтавĕ,
Чун илемĕ те ăс-халĕ.

Юлашки çула каюçăн
Ыр хăватлă ешĕл лăсă
Пуç айне хуратăн эсĕ.
Ватлăхра çеç мар, тăванăм,
Ырă тус пек ал тăсатăн:
Сăпкари ачаш ачашăн

Лăнкăр-лăнкăр пĕкечелĕх
Вуллуна эсех паратăн.
Тĕрлĕрен чир-чĕр лексен те,
Çырлупа та, лăссупа та
Пĕрре мар эп эмеллентĕм.
Ырă сыхчă эс этемшĕн,
Ан çухал, ыр кур та ашкăр!

## ӲКĔНӲ

*Германа асăнса*

Пĕр варта ӳтленнĕ пек тăванăм!
Пӳрнĕччĕ пире тату ачалăх:
Шуйланса выляттăмăр хавассăн.
Савнă ял çырми, урамĕ, хирĕ
Инçете вĕçмешкĕн вăй пиллерĕ.
Пурнăç çуррине çитсе пыруçăн
Тĕмсĕлтĕм тăванлăхăн ăшшишĕн,
Терт чухне сана аса илеттĕм,
Туслăх хӳтлĕхне курас килетчĕ,
Шутăм пурччĕ шав пĕрле пулмашкăн.
Çук-çке, çук-çке, ĕмĕтĕм çитмерĕ.
Аякка кайса саланнă хыççăн
Сĕврĕлчĕ ачалăхăн хавалĕ,
Сайраран сайра ума тухатчĕ
Санăн сăнару. Пайтах эс манăн
Пурнăçа илем кӳме пултарнă,
Тен, аптранă эс те пулăшусăр...
Маншăн халĕ ӳкĕнӳ çеç юлчĕ —
Ҫалăн, нихăçан та иртмĕ айăп,
Пуçăма пусать яланлăх парăм,
Пырăма ларас пек — çыртнă татăк,
Урăхла пек ĕнтĕ ун тути те.

# ЙЫХРАВ ЯРСА ТАРАР-И?

Чечек, чечек теетĕр,
Ĕлккен тесе иртетĕр,
Ҫăпкалатса тăмастăр,
Шывне сапма тухмастăр.
Типсе хăрса ларасса
Туймастăр-им, иçмасса?

Тăван, тăван теетĕр,
Ҫĕмесĕрех иртетĕр,
Хыпар ярса тăмастăр,
Хăна-вĕрле пухмастăр.
Ытла кичем пуласса
Сунмастăр-им, иçмасса?

Йăран-пахча илемĕ
Чечексĕрех килеймĕ.
Ҫăпкалатма тухар-и,
Шывне сапса тăрар-и?
Хитре чечек çынсене
Парнелетĕр илемне.

Кунçул, тĕнче илемĕ
Тăвансăрах килеймĕ.
Йыхрав ярса тăрар-и,
Ҫĕтсе илме тухар-и?
Пĕртен-пĕрех пурнăçа
Ирттерер-и курнăçса?

## ТАХТИ ТАХАМĔ

*Ю. Артемьева*

Пурăннă, тет, ĕлĕкрех
Тăхти текен такмакçă:
Такмаклама тытăнсан,
Такăнмасăр каланă;
Çил арманĕ евĕрлĕ
Хăлаçланса-суллашса
Такама та такранах
Тĕлĕнтерсе пĕтернĕ.
Пултарнă, тет, çав этем
Кулман çынна култарма.
Туя-мĕне кайсассăн,
Çĕçĕпеле выляса
Кутăн-пуçăн сикнĕ, тет;
Автан пек те авăтса
Кăтартмашкăн ӳркенмен.
Гитлер йышши йĕксене,
Бюрократа-сĕмсĕре
Тĕм-тĕкĕрех тустарнă.
Ана çитес паттăр çын
Питĕ сайра пулнă, тет.
Халĕ ун пек этемсем
Пĕтнĕ тесе калаççĕ.
Анчах эп çав хыпара
Ĕненместĕп пĕрре те.
Таçта мар, Шупашкартах
Куркалатăп пĕр çынна —
Уртей мучи мăнукне.
Тăхти тавраш евĕрлех
Çав çын мана туйăнать.
Кукша пуçлă пулмин те,
Тăхти пилне илнĕ пуль:
Ун аслашшĕ Тăхтипе

Паллашнӑ, тет, пасарта:
Иккӗш, ҫӗлӗк ҫавӑрса,
Ҫӗнекесем сутнӑ, тет.
Уртей мучи мӑнукӗ,
Халсӑр ҫынна курсассӑн,
Ҫурмӑш пулса иртес ҫук,
Хастарлатма сӑмахӗ
Таҫтан тухса тӑраять:
Чипер, лӑпкӑ пуплесех
Ҫын танлӑхне систерет,
Тӗрӗс сӑмах калама
Никамран та хӑрамасть,
Хӑрасан та — палӑртмасть,
Ҫурӑм хыҫне пытанса,
Йывӑр ӗҫрен пӑрӑнмасть.
Путсӗр-йӗксӗк этеме
Ҫӑшт йӗплесе илет те —
Лешӗ мӑштах шӑпланать.
Апла-капла суякан,
Элекҫӗпе ултавҫӑ,
Наян ҫын та вӑрӑ ҫын,
Хӑйсемшӗн ҫеҫ ҫунакан
Ҫашкӑр чунлӑ ҫӑткӑнсем
Юратмаҫҫӗ, тет, ҫакна.
Асла тухма хӑйсене
Ҫутҫанталӑк пӳрментен
Шурӑ куҫпа пӑхаҫҫӗ,
Нимӗн тӑва пӗлмеҫҫӗ.
Ҫапла Тӑхти тӑхӑмӗ
Ҫивӗч ӑспа ҫиҫнӗ чух
Юлмӗ чӑваш мӗскӗне.
Ахальтен мар яш-кӗрӗм
Уртей мучи мӑнукӗн
Такмакӗпе халапне
Ҫӑвар карса итлет, тет,
Ҫавна май вӗсен чӗлхи

Çивӗч çава евӗрлех
Туптанмашкӑн тытӑннӑ.
Хӑшӗ-пӗри ватти те
Унӑн ырӑ канашне
Йӑпӑрт чикет хӑлхана.
Çавӑнпа та йӑрӑ çын
Кӳршӗсемпе ӑмӑртма
Акатуя каять, тет,
Шикленмест, тет, нимӗн те—
Тӑхти пек такмакласа
Тӗлӗнтерет тӗнчене,
Савӑнтарать çынсене.

* * *

Шӑпӑр-шӑпӑр çумӑр хыççӑн
Çуталать уй-хир яр-уççӑн.
Çитрӗ те çыру санран —
Тунсӑх сирӗлчӗ манран.

Кайӑк-кӗшӗк те хавассӑн
Чарӑнми юрлать çӗр саслӑн.
Манӑн чун та чӗрӗлет —
Шӑранать вӑл, ирӗлет.

Уй-хире тухса курсам-и —
Сиплентерӗ ун асамӗ.
Пусарсамччӗ чӗрӳне —
Эс те кирлӗ çынсене!

Йывӑç-курӑк чун хавалӗ
Хӗвеле парасшӑн алӑ.
Сан хистевсӗр кӑмӑлу
Кӳрӗ савӑк тӗлпулу.

## АН ХӐРАТСАМ

Ҫӑхан мучи! Ан краклатсамччӗ,
Ан хӑратсамччӗ сассупа.
Мӗн тӑвӑн — ҫул выртать сан ҫумӑн,
Анчах эп тивмӗп йӑвуна.
Пырна пыл-ҫу сунса иртетӗп,—
Тискерленсе, хаярланса
Юман тӑрне чул вӑркӑнтармӑп,
Эп йӗртмӗп санӑн тӑхӑмна.
Чӑх-чӗп тытас тертӳ ан ҫиттӗр,
Пире ан тивтӗр хӑратма.
Пӗлетӗп, ҫимӗҫӳ ӳксессӗн,
Ӑна хыпать те йыт-качка,
Вара урса каять, тет. Эсӗ
Ӑна чунтан-мӗн ылханан...
Ылханассу, тен, ҫук та пулӗ,
Ҫапах чуна шиклентерет.
Ҫынна усал ӗҫрен чарма-тӑр
Ҫапла каланӑ несӗлсем.
Тепри, хӑй айӑплӑ пулин те,
Курмасть-ҫке шырлӑх сӑлтавне...
Ҫӑхан мучи! Ан краклатсамччӗ,
Ан хӑратсамччӗ сассупа.

* * *

*В. Пехиле*

Вулатăп йĕрсе Аттила,
Татах та вулас килет.
Сăвви пĕçертет кăмăла,
Сăвви — чăн илем те тивлет.

Яр! çиçĕм хăвачĕ — унра,
Шар! çутă шартать чуна.
Çути унăн сÿнмĕ санра,
Пĕччен вăл хăвармĕ çынна.

Сăпайлă этем тÿсĕмне
Тÿсме хăнăхатăн каллех.
Куратăн кунçул тупсăмне,
Пурнатăн ун пек — хресченле.

Çÿлти ăмăрткайăк çĕре
Лапах персе анчĕ иккен.
Ун пек вичкĕн куç, вут чĕре
Часах сас параймĕ пиртен.

Юратнă поэзи, хÿхле!
Куç хупрĕ ятна çĕклес чун.
Тус-йышăм! Хастарлăн çĕкле
Эс ун çĕклемне куллен-кун.

# УПАСАРРИ

Сĕм-авалхи ӳсентăранăн
Тĕс-пуçĕ, ĕренки çеç мар,
Хăйне кура унра упраннă
Тăван илемлĕхри сăнар.

Упа тусне хăйпе пĕр чунлă
Тесе шутланă та этем,
Хăй тĕнчине курасшăн çуннă
Ун пурнăçне сĕмленнĕçем.

Турат-çулçи ун урлă-пирлĕ,
Çӳл курăкăн — ĕлккен туна.
Пурне те тивĕçлĕ ят кирлĕ,
Чыс кӳрĕ, тен, вăл упана.

Ун вĕлтĕркке тĕрри-эрешĕ —
Хăех пин çăлтăр та хĕвел.
Çил ăнсăртран килсе илешĕ —
Шевле вылять унта вĕл-вĕл.

Хĕрупраçсен сарри пек пулĕ
Эреш упа тусăмăра.
Яланлăх юлтăр илĕртӳллĕ,
Хитре тĕнче — çак сăмахра.

* * *

Гараж хыçне, улах çĕре,
Çĕкленнĕ сухăрлă вĕлтрен.
Лармин яр-çутă чечекре,
Шăрши кĕрет хĕрхӳн, хиврен.

Вĕт шăллă пăчăкă пекех
Қартланнă çулçă хĕррисем.
Ална пырса, ай, ан чикех —
Ăшалĕç вутсăрах вĕсем...

Вĕлтрен, вĕлтрен! Эс халь мана
Мĕскер тесе каласшăн-ши?
Минренĕ, сĕлпĕрккe чуна
Мĕн çивчĕш ăс парасшăн-ши?

Мĕскĕнлĕхе хамран сирме
Хастарлăхна сĕнетĕн-и?
Тискер, йăх-ях вăя хирме
Хаярлăхна пиллетĕн-и?

Турткалашан кăмăлăма
Çунтар-ха çулçă вучĕпе.
Сурса тăран шăмшакăма
Вĕтелесем — пыран сиппе!

* * *

Чĕлтĕр çĕнĕ уйăх
Кантăкран сăнать.
Çĕнĕ шухăш-туйăм
Вăл мана сунать.

«Эпĕ çĕнелетĕп,
Эсĕ те çĕнел.
Ыт пулсан та эпĕ,
Эсĕ пул тĕкел.

Ху çĕнелнĕçемĕн
Çиттĕр ĕмĕтӳ.
Чун савнин чун-сĕмĕ
Пултăр сан хӳттӳ.

Вăл чунтан ĕнентĕр
Сан тасалăхна.
Ĕçӳпе хĕмлентĕр,
Пулăштăр ăна.

Уншăн çакă пулĕ
Чăн-чăн пулăшу.
Ку вăл — шайлашулăх,
Хăтлă килĕшӳ...»

Кăмăлушăн, уйăх,
Пысăк тав сана.
Аслă пурнăç уйĕ
Упраин хăвна...

Темшĕн кĕмĕл çĕрĕ
Килчĕ ман аса.
Парнелем те — çӳрĕ
Тусăм тăхăнса.

Ҫӗмӗл ҫӗрӗ ҫеҫ-и
Пулӗ ман парне,
Ҫулленхи ман ӗҫӗм
Ҫитӗнсен кӗрнек?

* * *

Кӳрентертӗм сынна каҫарусӑр,
Пӗр татусӑр йӗрет халсӑр чунӗ.
Тӳррипе каласа ӳкӗнсен те,
Ман тӳрре тухасси пулмӗ халӗ.
Ырлӑх суннӑ ҫӗртех шырлӑх ҫитрӗ.
Мӗн туса, мӗн тупса шайлашар-ши?
Ӑшӑмра ҫакӑн пек ҫеҫ калатӑп
(Урӑх нимӗн тӑва та пӗлместӗп):
Пӗр хут мар, виҫ хут мар, ҫичӗ хут та
Ӗмӗтри телейне вӑл курайтӑр;
Суранне чӗрлӗх шывӗ сиплетӗр,
Манӑн ҫук айӑпа та сирейтӗр.

* * *

Эс пур кунта рехет ҫитменшӗн
Кутӑнлашатӑн, тарӑхатӑн,
Йӳҫен сӑра пек тунсӑх-эншӗх
Еккипеле салху тӑратӑн.

Ҫав тапхӑрта ҫак пурнӑҫ ҫулӗ
Ҫавӑрттарать пӗр урӑм-сурӑм,—
Лӑш усӑнать имшерлӗх хулӗ,
Авнать-ванать айван ҫанҫурӑм.

* * *

Хупах, е ухлём, е вĕлтрен
Мана халь канăçлăх кӳрет,
Тӳлек çĕре çитмессерен
Çĕн илемпе тĕлĕнтерет.

Шап-шурă, хĕрхĕлтĕм, кĕрен
Чечеклĕ ĕнтĕ йытпырши.
Çывăхнерех-и лекнĕрен
Ун уçă варкăшлă шăрши.

Чакать çакна иленнĕрен
Аш вăркани те ырату.
Хаяр пулсан та вĕлтĕрен,
Унра курмастăн хăрату.

Тĕнче сути çитейменрен
Кунта та пур-тăр кĕрешӳ,
Анчах çынна чип-чипертен
Вĕсем кăтартмĕç кӳлешӳ.

Мухтав та мул тивĕçменрен
Чееленмеççĕ манпала,
Чун пархатарĕ пĕтнĕрен
Тапса сикмеççĕ айккалла.

Суя суймасăр, чĕререн
Юхать сăмахăм ерипе.
Тав турĕ ухлём, çил вĕрсен —
Пуç тайрĕ вĕтĕр шерепе.

* * *

Ырă кÿнĕ çыннăма
Тав тăвам тесеттĕм,
Тек хатĕрленеттĕм —
Тивĕçмерĕ курнăçма,
Қуçа-куçăн калаçма.

Шухăшлаттăм сад лартма,
Тек ĕмĕтленеттĕм,
Хÿтлĕх пултăр теттĕм —
Май килмерĕ садăма
Тулăх çимĕçлĕ тăма.

Савнă тенĕ çыннăма
Савăнса кĕтеттĕм,
Савăшăп-ха теттĕм —
Тÿр килмерĕ тĕл пулма,
Пыл пек тутлăн савăшма...

Пурнăç, пурнăç! Пирĕнпе
Юриех-и эс вылятăн,
Пытанса кулатăн?
Ырă эсĕ пĕринпе,
Çиллĕ эсĕ тепринпе.

Чун кÿтет кÿреннипе:
Ӳкĕнен-ÿпкелешетĕн,
Қилĕшÿсĕр кÿлешетĕн.
Қĕтнĕ пек пулманнипе
Ырă мар пек пĕтĕмпе.

Пурнăç, эсĕ тÿррипе,
Çук, улталамастăн,
Пирĕнтен кулмастăн:

Сив пулсан та пĕринпе,
Ырă эсĕ тепринпе.

Çавăнпа та ытларах
Курăнатăн хӳхĕм.
Çиттĕр пирĕн тӳсĕм —
Терт иртин асаплăрах,
Килĕ савнăç хăтлăрах.

## КĔМĔЛ АЛТĂР

Хусанăн хĕрĕх алăклă
Хăруш тĕрми çинчен хайланă
Юрру ăша хĕртсессĕн те,
Санах юп куртăм, Тутирекĕм.
Хăрах куçпа пулсассăн та,
Тахçантанпах курасшăн эпĕ
Çап-çутă кĕмĕл алтăрна,—
Ăна Пăкач-мĕн парнеленĕ.
Курассăм çеç те мар, хуллен
Хавас ăна тытса пăхма та.
Асамлă вăй кӳрессĕнех
Шав туйăнса тăрать вăл маншăн.
Пăлхавçăсен йышне пухма
Сана çĕкленĕ харсăр кăмăл
Унта упраннăн ăш вĕçет,
Чĕнсе тăрать таса хăвачĕ.
Пур халăх ĕçченне савса,
Мухтавлă вырăс утаманĕ
Ирĕклĕхе çĕнсе илме
Сана ал тăсрĕ ютшăнмасăр.
Чăвашсене пухас тесе,
Ялтан яла пайтах хутларăн,
Улпут-хуçа сăнни тĕлне

Пуласситчен те шикленмерӗн.
Ӗссыннисен кӗрешӗвне
Эс ӗмӗт ҫитнӗ пек вӑй хутӑн.
Тӗрме нуши лексессӗн те,
Пачах та ӳкӗнмерӗн уншӑн.
Ахальтен мар чунна-варна
Пусмӑрҫӑсен кулли витернӗ.
Ҫав ирсӗр мӑшкӑл-асапа
Эс каҫармашкӑн пултараймӑн.
Музейсенче ҫӳренӗ чух
Сан алтӑрна курса пулмарӗ.
Ҫӑмрӑкланман-тӑр вут ҫинче,
Ҫунсах кайман-тӑр кӗмӗл савӑт.
Ҫӗл пулнӑ ҫурт ырӑнӗнче
Ӑна тимлех, тен, шыраман-тӑр.
Унта ҫитсе чакаланма
Тӗпчевҫӗ тусӑм та тӗв турӗ.
Сан кӑмӑлу та хускалсан,
Атя пӗрле, тӑванӑм, эс те.
Тен, тунсӑхларӗ халиччен
Пире кӗтсе ҫав кӗмӗл алтӑр?

## «ЧЕЧЕК»

*(В. Яковлевӑн сӑрлӑ ӳкерчӗкӗ)*

Йывӑр инкек пуҫ ҫине йӑвансан,
Хурлӑ кунсем хупласа хӑратсан,
Эп ҫӑлӑнатӑп — ҫитсе сан умна,
Тӳсӗм паратӑн тӗрексӗр чуна.
Пӗтӗм тӗнче хуйхине-суйхине
Илнӗ те эсӗ пӗччен хӑв ҫине,
Аслӑ сӑваплӑх палли пек, ялан
Чӑн юрату ҫутипе ҫуталан.

## ЧУЛПА ХĂМЛА

Эй, чулăм!
Эс пултăн этемшĕн
Пĕрремĕш ĕç хатĕрĕ.
Хăтартăн пин хут та
Çичют çĕнесрен:
Е ухă-етреччĕ,
Таран çĕмрейми чул хӳме те.
Патша пуçилемĕ,
Е сулă та çĕрĕ
Санпа сумлăрахчĕ.

Тăванăм —
Ши! кайнă, пи! кайнă хăмлам!
Хаяр çимĕçӳ
Тырпул сĕткенне
Çунат хушса парĕ,
Чĕртĕ юнăмра
Асамлă хаваслăх,
Пучаху пек çăмăллăх кӳрĕ.
Сăваплă сĕткенĕмĕр ашшĕ!
Санпа-çке чысланă
Пур аслă вăя,
Санпах-çке шавланă
Уяв кĕреки.

Чул та хăмла!
Сирĕн ятăрпала
Шанчăклă пулнă тупа.
Пуласлăх çулне
Уçса пынă евĕр
Курăннă мар-и эсир?
Пин çул каялла
Татнă пек çирĕп сăмах
Пин хут ытларах та

Кирлӗ паян тӗнчене.
Ӗнтӗ шӑпамӑр килет
Ҫирӗп сӑмах панинчен,
Ӑна тытнинчен.

Туссемӗр, пирӗн те
Ӗмӗрлӗх пурнӑҫшӑн,
Ӗмӗрлӗх тунӑ тупа пек,
Аллӑмӑр тытнӑ ӗҫӗмӗр
Тӳрӗ пултӑр!

## КУ-УК!

Хӳккӳ* хӳклетет хӑлхара,
Сасси кунсерен вӑйлӑрах:
Хӳ-ӳк! Хӳ-ӳк! Хӳ-ӳк!
Вӑй илчӗ чӑвашӑн хавалӗ,
Куҫа курӑнать ун авалӗ.

Юрлаҫҫӗ ниме юррине,
Ҫӗклесшӗн ҫӗн пӳрт пурине:
Ку-ук! Ку-ук! Ку-ук!
Ятарлӑ йыхрав ял хускатӗ —
Самант ҫӗнӗ пӳрт вӑл хӑпартӗ.

Тухъян кӑмӑл ҫук тутӑхма,
Ҫӳпҫе тӗпӗнче пӑнтӑхма:
Ҫу-ук! Ҫу-ук! Ҫу-ук!
Пуласшӑн иккен тум илемӗ —
Аваллӑхӑн ырӑ элемӗ.

Тинкерӗр тум-юм тӗррине —
Ҫитерӗ тӗнче хӗррине.

*Хӳккӳ — кӗпҫе йышши авалхи музыка инструменчӗ.

Э-эх! Э-эх! Э-эх!
Сăнарлăх тĕнчи сăн-сăпачĕ
Пулинччĕ илемлĕх хăвачĕ!

Пин тĕрлĕ халап эс илтетĕн —
Вĕсен туртăмне те пĕлетĕн:
Чи-им! Чи-им! Чи-им!
Халех ан мансамăр пире те —
Унпа эс хăвнах вăй кӳретĕн!

Янрать юрăпа кĕреке:
Упрантăр, тет, ырă йĕрке.
Э-эй! Э-эй! Э-эй!
Ан пул халăхран эсĕ ăслă,
Ан пул çăкăртан эсĕ аслă.

Хускалнă пек аслă ниме,
Мĕнпурĕ чĕнет çекленме:
Ку-ук! Ку-ук! Ку-ук!
Ешертĕрччĕ халăх ăс-халĕ,
Ан сӳнтĕр илемлĕ хавалĕ!

# ЧĔРĔП

Ах, чĕрĕпĕмçĕм-чĕрĕп,
Çӳреймĕн сывă-чĕрĕ.
Тĕп турăм-çке сана —
Эс лекрĕн каткана.
Ăна чавса лартсаттăм,
Унта кăшт шыв ярсаттăм,
Пĕлмерĕм хуплама,
Сиреймĕп айăпăма.
Çапла вилни элчелсĕр
Хăрушă та пит мелсĕр.
Тухасшăн тăрмашса,
Эс пиçрĕн пуль ăшша.
Ылхантăн эсĕ, ахăр,
Çӳле улăхаймасăр
Этем тусна капла.
Тен, хăвăнтан ытла
Ачусене шеллерĕн?
Тен, кăшкăртăн тискеррĕн
Эс, пулăшу кĕтсе...
Тăратăп пуç пĕксе.
Тен, ыр сунсах килейрĕн —
Ҫанаш парасчĕ терĕн
Пахча ĕçне тума,
Савса ман пахчама...
Апла-и, апла мар-и—
Çапах инкек хупларĕ
Сăваплă чĕрчуна,
Чĕртеймĕп тин ăна.
Ах, чĕрĕпĕмçĕм-чĕрĕп!
Ҫунта килсе-и çӳрĕп,
Асилĕп-и — пĕрех:
Эс — çук, эп хам—чĕрех.

# АНА ПАРÇИ

Иртрĕ ĕнтĕ вунă çул та —
Кусăмран кая пĕлмест
Ум тулли çут çăлтăр сапнăн
Çиçкĕнен сенкер чечек.
Теччĕ хутлăхне виçеттĕм,
Çĕнĕ юрă шыраса.
Пĕлтĕр çех хăпартнă çулăн
Кăпăшка ик айккине
Сырăнса ӳсетчĕ курăк,
Чĕлтĕр-чĕлтĕр йăлкăшса.
Чечекне танлаштармашкăн
Хӳхĕмрех япала çех
Асăма килсе капланчĕ,
Ылмашса пĕр-пĕринпе.
Кăвакарчăн кусĕ евĕр
Терĕм эп ăна малтан.
Тепринче вăл чӳхенейрĕ
Изумрудăн шевлипе.
Çепĕç хĕр чĕлхи пек ăшшăн
Ачашлать вăл чунăма.
Тĕлĕнтермĕш юрă-кĕвĕ
Илтнĕн туйăнчĕ мана.
Йĕпкĕн хĕрлĕ мăкăньрен те
Халь вăл маншăн хаклăрах.
Хитререх курна пусларĕ
Ешĕл тулă, сар хĕвел.
Вашлатса вара çул тытрăм
Эп уй урлă ял енне...
Иртрĕ ĕнтĕ вунă çул та —
Кусăмран кая пĕлмест
Ум тулли çут çăлтăр сапнăн
Çиçкĕнен сенкер чечек.

* * *

Эй, каçсем,
Хуйхă ӳкнĕ каçсем!
Хуйхине ӳкерин —
Ураран ан ӳкерĕсĕр,
Хам сывлас сывлăша
Çитлĕнрех çавăрса çитерĕсĕр!

Эй, каçсем,
Канăç çĕтнĕ каçсем!
Канăçа çĕтерин —
Туссене ан çĕтерĕсĕр,
Чун хӳтти тус-йыша
Çывхарах çавăрса çитерĕсĕр!

Эй, каçсем,
Ашăм вĕçнĕ каçсем!
Ашăма вĕçтерин —
Шанчăка ан вĕçтерĕсĕр,
Кун курас шухăша
Çивчĕнрех çавăрса çитерĕсĕр!

## ХЁРТСУРТ

*Манюк мăшăрăма*

Авал чăвашăн кăмаки çинче
Хĕртсурт тӳлеккĕн пурăннă иккен.
Пăри пăтти чӳкленĕ каçсенче
Вăл курăннă шур тумлă ыр пикен:
Сурпанлăскер, вăл уйăх çутипе
Пĕтĕр-пĕтĕр! арланă кĕнчеле.
Çапла кил пурнăçне хăй ĕçĕпе
Пыма пилленĕ сĕт çулĕпеле.
Е кучченеç пуçламалла пулсан,
Малтан ăна вăл пăхнă астивсе.
Е ĕçкĕре хаваслă сăйлансан,
Ăна тав тунă «тав сăя!» тесе.
Вучахăмăр хуçи, килйыш сыхчи,
Вăл çирĕп тытнă пӳртĕн никĕсне.
Ĕрчевлĕ пултăр тенĕ ачипчи,
Сыхланă кил тирпей-илемлĕхне.
Ай-яй, маттур иккен чипер хĕртсурт:
Ытах та харкашу лăпланмасан,
Килтен писет вăл, саланать, тет, çурт,
Ăнмасть вара хăй пурнăçу та сан...

Эй, мăшăрăм! Нумай-нумай сăмах
Сана каламаллаччĕ тав туса —
Телей тĕрекĕ пулнă тусăма
Нимех те калаймарăм-çке тупса.
Эй, ыр хĕртсуртăм, ырă пирĕшти!..
Çапла чĕнем-и халĕ те пулин?
Эс пуррипе ăнать кунçул утти,
Эс пуррипе вăл туйăнать туллин.
Килйыш перекетне, тирпейлĕхне
Тытса пыратăн эсĕ чи малтан.
Чĕре канăçлăхне, çирĕплĕхне

Эсех упратăн пĕтĕм вăй-халтан.
Эс — манăн куç илемĕ, чун ăшши,—
Пыринччĕ вăл элчелĕм çитиччен.
Сана епле юравлă пулам-ши,
Эс хăв мана юранă пек хальччен?
Ар пуçăмпа, тен, манăн ытларах
Вăй хумаллаччĕ йывăр кӳлĕмре.
Пĕлсем эппин: ман ĕмĕт çапларах —
Кунçул ăна кăлартăрччĕ тӳрре!

## ТĔЛĔКРИ АСАМАТ КĔПЕРĔСЕМ

Куç курăмĕ анлăш тӳпе анинче,
Инçе те яп-янкăр сенкерлĕх çинче
Эп куртăм тем чул асамат кĕперне:
Картланă пăртакçă вĕсем пĕр-пĕрне;
Хапха пек, хапха пек тăрса тавралла,
Ĕлккен чĕнтĕр пек илĕртеç кăмăла;
Çич тĕслĕн çиçеç йăмăхса-йăлтăрса,
Çунаççĕ вĕсем, ытамне йыхăрса...
Унччен тĕлĕкре эп кураттăм шавах
Хура тӳпене те пăтранчăк шыва,
Çыртаççĕ хăш чух йытăсем урaран,
Ахрат çырмине сирпĕнес пек тăран...
Куçа асаматлă тӳпе тĕрленет,
Савнасчĕ кăна — темшĕн чун шикленет.

## ВĔЛТРЕН ЯШКИ

*(Шӳт)*

Вĕлтрен яшки ҫиетĕп.
Вĕлтрен яшки ҫисессĕн,
Ҫын сăмахĕ тивеймест,
Ылхан витмест, тееҫҫĕ
Тесе ларать хуняма.
Ку сăмаха ваттисем
Шӳтлесе те илĕртсе
Ҫеҫ каланă пуль те-ха,
Ҫапах сыпам яшкана.
Пĕрер татăк аш ярсан,
Техĕмлĕ те ку ҫиме,
Чĕре патнех пырать-ҫке.
Эппин, ҫием пикенсе,
Унăн усси ҫук мар-тăр —
Ҫирĕпленччĕр шăнăрсем,
Манăн пуклак чĕлхе те
Тĕрлĕ йăх-ях таврашне
Вĕлтрен пек вĕтелеме
Ҫивĕчленсе пытăрччĕ.
Кашкăр чунлă этемсем
Шăл хăйраса тăрсан та,
Такăнас мар, ӳкес мар.
Е такăнса ӳксен те,
Ялт! ҫеҫ сиксе тăрасчĕ.
Мĕнле, ара, ку ҫынна
Хаяр вите пĕлмерĕ
Тесе тăччăр тĕлĕнсе.

## ЧИКЕ МУЧИ

— Лайăх-и те аван-и!
Чипер-сывах пурнан-и!
Юмарт шăллăм, ман килес!
Пур-и килте, çук-и эс?
Йăпăртлăха кĕрем-ха,
Курса каяс терĕм-ха.
Усал чунлă ку тесе
Çӳретĕр-çке кӳренсе.
Халь улшăнчĕ самана,
Улăштарчĕ вăл мана.
Халĕ эпĕ урăххи.
Чурăс чунăн хăраххи
Курăнаттăм — йăлăхрăм,
Ĕнтĕ çынна хăнăхрăм.
Тарăхсан та, этеме
Пĕлетĕп-ха шеллеме.
Нимĕн те шарламасан,
Хушăран хытармасан,
Çын та тухать йĕркерен,
Йĕркерен те виçерен:
Вăрман касать ытларах,
Çиесшĕн вăл тутлăрах.
Ун пеккине тепĕр чух
Каçарма чун тӳсес çук:
Хĕстеретĕп аллине,
Пытаратăп ун мулне.
Эсĕ, шăллăм, йăваш та,
Халаплама хавас та —
Кунта тухса килтĕм-ха.
Çаптарам-ха сăмаха.
Килĕмре ытла кичем,
Пурăнатăп-çке пĕччен.
Ачам-пăчам инçетре,
Инçетре-çке — тĕнчере,

Килсе курмасть хушăран
Эп çитейми çĕршывран —
Юрать эсĕ юратан.
Лекĕ те-ха ăнсăртран
Эс ун пек хăтланнăшăн,
Чунна ирĕк янăшăн.
Хĕртсурт, Улăп, Вутăшпи —
Йĕрĕхле чунсен шăпи
Илĕртет сан кăмăлна,
Йĕрĕнтерет вăл çынна.
Ху пĕлместĕн пулĕ-ха:
Пĕри, чĕнсе улаха,
Тӳпелесшĕн, тет, сана —
Асăрхан кăштах, сăна...
Ĕнтĕ эс тахçантанпа
Юмахпа та юрăпа
Анрашан та янрашан,
Таçта-таçта кармашан.
Энтип Ваççи каларăш,
Тух тулалла эс, карăш:
Сан куçу та, пуçу та —
Уçăмланĕ сассу та.
Курса çӳре тĕнчере,
Мĕн пăнтăхан пӳлĕмре!..
Вăл аплине апла та,
Тĕнче курăн капла та.
Çапах, шăллăм, тухкала,
Унта-кунта пăхкала.
Ĕлĕкхиллех ан пурăн —
Эсĕ капла шар курăн.
Вĕрентнĕ пек пулчĕ пуль.
Каламалли темĕн чул —
Чунăм тӳсмест — мĕн тăвас?
Халаплама эп хавас.
Сана ĕçлес ĕç-хĕлрен
Татрăм пуль те — ан кӳрен.

Тав, мухтав, хисеп те чыс!
Пархатар курсамччĕ эс.
Ютшăнмарăн эс манран —
Мăкламас муклашкаран,
Манăн хур сухалăмран,
Юнашар килсе ларан.
Хăналарăн эс мана —
Қăштăр-кăштăр мучуна:
Чей ĕçтертĕн лимунпа,
Лимунпа мар, ыр чунпа.
Қурăшасси тахăçан.
Хам пата хăçан каçан?
Пĕрре йăпăрт пырса кур.
Халап-юмах татах пур...

## ВАТ АШШИ

Иртенпех пӳлёме
Ҫутӑ сарӑ сӑн ҫапнӑ.
Ахаль мар шӳлкеме
Хурӑн ушкӑнӗ ҫакнӑ.

Систерет пек пире:
Ват ӑшши — виҫӗ кунлӑх.
Пулмӗ ку сивӗре,
Ӑшӑ кун шутлӑ юлнӑ.

Хускалма та хӑрать
Шӑплӑхра ҫил ачи те,
Тӗлӗнсе вӑл тӑрать:
Ашкӑнмашкӑн хӗл ҫитӗ.

Итлесем хурӑна:
Шӳлкеме те ҫеҫтенкӗ
Ҫилсӗрех таврана
Сас ярать чӗнкӗр-ченкӗр!..

Сар тавралӑх шевли
Янӑрарӗ ачашшӑн.
Халь этемӗн алли
Ҫунат пек авӑсасшӑн.

Юлашки вӑй-халпа
Юлашки хут ҫӗкленнӗн
Чи ӗлккен хавалпа
Чун-чӗремӗр хӗмленӗ.

* * *

Қаллех пилеш татмашкăн вăхăт.
Çырли — ялав çакса тултарнă пек.
Турачĕсем ăшпиллĕн усăнаççĕ,
Татма сунаççĕ пиçнĕ çимĕçе.
Çавна кура-тăр, уншăн савăнса-тăр,
Илешрĕ ушкăн пăчăр пилеше.
Ах, пăчăр тусăм! Сыхăрах пулсамччĕ —
Çырла тесе, ан манăр тимлĕхе:
Сисеймĕр — çăткăн чун персе антарĕ...
Нумайранпа сире курманнипе
Шавах сăнатăп, канăçлăх туятăп.
Эсир вĕçсен — тӳпемĕр хăтлăрах.

* * *

Вăштăртатса иртет-и çил —
Қаш-каш кашлать чăпар юманлăх,
Қăштăртатса утатăп-и —
Чăштăртатса юлать сар çулçă.
Янтарь пек йăлтăр йĕкелсем
Қуçа йăлт-ялт курăнкалаççĕ...
Ах, çук! Вăштăртатмарĕ çил,
Чăштăртатмарĕ сарă çулçă —
Вăштăртатса иртет кунçул,
Вăш-вăш çунат сулать-мĕн вăхăт.
Анчах ăçта, ăçта йĕкелĕм,
Хăçан тĕвĕленсе тĕш пулĕ?..

# ТУСЛĂХ ЯЧĔПЕ

## ТĔЛПУЛУ

Ларатпăр Рига хулинче
Улаххăн тус кĕрекинче —
Латыш, эстон, грузин, чăваш.
Те пулнăран хуçи йăваш,
Қал-кал юхса пырать сăмах,
Аван — алпа сулкалашма.
Қуран,— пăхсан латыш çине,—
Эс Лачплесис * кĕрнеклĕхне.
Йăваш тесессĕн те ăна,
Çĕнме пултарĕ упана.
Эстон каччи те — паттăр пек:
Вăл, калăн, Қалевипоэг **.
Сар хĕр пек ăшă ун кулли,
Пуплетĕн кăмăлу тулли.
Грузин, патвар пулмин сăнран,
Хăватлă сас илтен унран:
Ту тăрринче калаçнă пек,
Вăл танлăн хăлаçланчĕ тек.
Вăл тигр тирлĕ паттăра ***
Асилтермест-и-ха, ара?
Çуратнă халăх ячĕпе
Қалаçнă чух пĕр-перинпе
Чăнах та кирлĕ пулмалла
Çав улăпла йăла-пăла.

---

* Латыш халăх эпосĕн геройĕ, ун ячĕ «упана тытса çуракан» тенине пĕлтерет.

** Эстон халăх эпосĕн геройĕ.

*** Кунта Ш. Руставелин «Тигр тирлĕ паттăр» поэминчи тĕп герой — Автандил çинчен сăмах пырать.

Пули-пулми айван сăмах
Часах пистерĕ тусăма.
Сисмесĕр тĕлсĕррĕн чĕнсен,
Чĕрӳ кăртах сикет иккен.

## РЕНЕ ҪАЛАНДИА САВАҪА

Ытти туссем пекех, Рене,
Иртсем чунри кĕрекене!
Ыр кăмăлна хапăллама
Тăсатăп ăшшăн аллăма.
Асаттесем аваллăхра
Хăш чух, тен, вирт яра-яра
Тустарнă пĕр-пĕрне. Анчах
Ырра та хăнăхнă пайтах.
Пĕлеймĕн халĕ пĕтĕмпе...
Илентерет илемĕпе
Пире Ҫуллахи Сад карти.
Йăр-яр чĕкеҫĕн ҫунатти
Черченлĕхне хăварнă-ши,
Чăваш тĕррин йĕрри-харши
Кунта йĕрленнĕ-ши тата?—
Черчен те хӳхĕм, тупата!
Сăнанă май ун илемне
Аса илен грузин князне *.
Пулман пулсан ун ыр хĕлхем,
Килес те ҫукчĕ ҫак илем.
Грузин юп курчĕ чăваша:

---

* Кунта Егор Леонтьевич (Георгий Леванович) Дадиани ҫинчен сăмах пырать. Вăл Российăна XVII ĕмĕр вĕҫĕнче II Арчил патша свитипе пĕрле куҫса килнĕ, I Петĕр ăна Мускав ҫывăхĕнче тата Чулхула кĕпĕрнинче ҫĕр панă.

Ун шăпине хывса ăша,
Усравлăх илчĕ хăй патне.
Чăваш ачин хушаматне
Вăл хучĕ хăйĕн ячĕпе.
Вара тĕнчемĕр ăсĕпе
Кĕвелĕк пек вăй илмелле,
Аста шайне çĕкленмелле
Çул уçрĕ вăл ăна валли.
Хайхи ĕçчен чăваш алли
Шăратрĕ чун уççи илем...
Рене, мĕскер кала пĕлем?
Эппин, тахçантанпах грузин —
Чăвашпала туслашнă çын.
Эппин, çав ырă кăмăла
Халь пирĕн чыслă тытмалла.
Вăл мар-и пурнăç тыткăчи?
Хăтаракан вăл марччĕ-и,
Çĕршывăма терт хупласан?
Тавах, чуну ыр пулчĕ сан!
Парар та ал пĕрне-пĕри —
Янратăр туслăхăн юрри
Сăваплă пĕрлĕх вăйĕпе,
Çуллахи Сад хавалĕпе!

## ÇИТĔН, ТУСЛАХ ЙЫВĂÇĔ

*Улдис Берзиньша*

Райнис çĕрĕнчи çĕн пĕлĕш-тус
Ăшшăн хапăлларĕ, хастарланчĕ
Чăвашсен илемлĕ сăмахне
Латышсемшĕн йывăç пек чĕртмешкĕн.
Курчĕ вăл унта ĕлккен тĕнче —
Чун-чĕре илемĕпе тĕрекĕ,
Çынлăхпа тăванлăх туйăмне.
Çав ятпа эп асăнмалăх илтĕм
Латышсен юратнă йывăçне.
Чăвашра ӳсме ăна пиллерĕ
Çĕнĕ тусăм ырă кăмăлпа.
Çитĕн, çитĕн эсĕ, Латви хырĕ!
Эп тăрам çĕрне хусăкласа,
Тухăп ытлă-çитлĕ шăвармашкăн.
Сарăл, çĕкленсе çӳлтен çӳле!
Эс йăмра пекех пул чĕрĕ, харсăр,
Кайччăр чăшăлах тымарусем.
Çĕн илем кунта кӳрсемччĕ эсĕ,
Алла-аллăн çитĕн йăмрапа!

# КЁРЕКЕ ЮРРИ ЕККИПЕ

## АЛРАН АН ҪАЙ!

Хура-хура, хура ҫĕре
Анне кăкри пек темĕр-и?
Вăл мар-и аслă тĕнчере
Чи пуянни те мăнтăрри?
Вăлах пире тăрантарать,
Вăлах пире тумлантарать.

Ахах пулаймĕ ахальтен,
Акмасăрах шăтмасть тырпул.
Мĕн акнине вырса илен,
Акасăрах пухаймăн мул.
Ыйха ан туртăр акара —
Хуйха ўкместĕр авăнра.

Алран ан кай, ака-суха,
Ялан пулсамччĕ ал ҫемми!
Ҫĕр сĕткенне сăха-сăха,
Хунатăр хăмăл ал кĕми.
Тăрри чакан пек ҫитĕнин,
Пĕр пĕрчĕрен пине ҫитин!

## АСРАН ҪАЙМИ

Атте-аннемĕр юратса
Пўрет пире пуян тĕнче.
Атте-аннемĕр йăпатса
Ҫитĕнтерет арки ҫинче.
Вĕсемсĕр курас ҫук кунҫул,
Ҫак ҫут тĕнчемĕр — аслă мул.

Атте-аннемĕр пуррипе
Сĕвĕрĕлмест кил-çурт ăшши.
Атте-аннемĕр пуррипе
Ирĕклĕрех, ай, кил хушши.
Атте-аннемĕр ырлăхне
Эс тавăраймăн ĕмĕрне.

Атте-аннемĕр пиллесен,
Сан ырлăху пине çитет.
Вĕсен пилне илеймесен,
Сан пурлăху кĕлпе вĕçет.
Пилпе пĕрле — кăвак хуппи,
Пил илмесессĕн — ăш хыппи.

## ПЕЛЕШ-ТАНТАШ

Çын пурăнать çынпа кăна,
Пĕччен аваймăн пĕкĕ те.
Тус-йыш, ялйыш çĕклет çынна,
Çĕклет çунатлă ĕмĕте.
Тĕнче тăвансăр аслă мар,
Ялйышсăр та хаваслă мар.

Тусна тупсан та çĕннине,
Кивви ан тухтăр асăнтан.
Тăнла тусу ăс панине,
Маттур пулсассăн хăвăнтан.
Яш вăхăт кайăкла вĕçет,
Тус-йышсăр парăнмĕ инçет.

Тăван тути, ай, пыл тути,
Ыр кўршĕ кая мар унран.
Сана тăван çĕршыв хўтти
Вĕсем кўреççĕ ачаран.
Тăван ялйыш — тăван йăва,
Ан ман çуралнă çĕршыва.

## ҪЁРХИ УЯВ

Ҫӗр-кӗр вӑрман, кӗр-кӗр кӗрле,
Турат ҫумне турат хушса.
Ҫӗр-кӗр кӗрле, хӑна-вӗрле,
Пӗр-пӗринпе, ай, курӑшса.
Сахал-и авӑннӑ уйра,
Халь савӑнар-и хӑнара?

Ҫӗрхи уявӑн кӗреки
Ёҫченшӗн пулмӗ ытлашши.
Ҫаврӑнтӑрах сӑра курки,
Янратӑрах юрри-ташши.
Ҫӑпӑкланса тӑрин сӑра,
Ҫитейтӗр чӑкӑт пурсӑра!

Сӑра сакки, ай, сарлака,
Сӑра тесе — ӑсран ан тух.
Хӑвна ан тыт пит шалтӑркка
Телейпеле киленнӗ чух.
Йышпа пӗрле юрри-кулли
Кӗрнеклӗ, ҫутӑ пӳрт тулли.

## ПӖРЛЕ ПУРАНАР

Тӗнче тытас пек ан капаш,
Ҫын кӑмӑлне кура телей.
Ик хут пурнас пек ан аташ,
Пӗрне чипер пурна пӗлей.
Пурнаймӑн иккӗ тӗнчере,
Ҫӗртен пулни кӗрет ҫӗре.

Тараймӑн вилӗм аллинчен,
Ун умӗнче эпир пӗртан.

Ёҫле, пултар вӑл киличчен,
Пӗл савӑнма кунҫул пуртан.
Вилме тивсен те уйрӑмшар,
Унччен, туссем, пӗрле пурнар!

Умра пайтах хури-шурри,
Ӑна тӳсмешкӗн ал тытар.
Усалӑн улттӑ, тет, ури,
Ӑна пӗрле ҫапса хуҫар.
Ах, такӑнмасӑр ӳкес мар,
Ах, ватӑлмасӑр вилес мар.

## АЙ-ЯЙ-ЯЙ-ЯЙ

Ларатпӑр-и кӗрекере,
Саркаланса юрлатпӑр-и,
Ахаль-и е пӗр-пӗр ӗҫре
Каллех юрла пуҫлатпӑр-и —
Калас сӑмах капланнӑ май
Хушса пыран *ай-яй-яй-яй.*

Ҫӗклентерет вӑл савнӑҫа.
Ҫунат хушать, ҫунат сарать.
Лӑпланайман кулянӑҫа
Вӑлах сипетлӗн пусарать.
Чун хӗлӗхӗ чӗтреннӗ май
Хӑех янрать *ай-яй-яй-яй.*

Асамлӑн янӑран ҫавра
Кӳрет вара ҫепӗҫлӗхне.
Чуну ваш-ваш вӗҫет вара
Сенкер тӳпе инҫетлӗхне.
Ҫӗкленнӗ-пусӑрӑннӑ май
Чуна уҫать *ай-яй-яй-яй.*

## САВНИ ÇЫРАВĔСЕМ

Айван, тĕнче ылханĕ çитнĕ пек,
Хăр-тăлăххăн туяттăмччĕ хама.
Чун çывăратчĕ хытă кӳтнипе —
Витернĕ тейĕн чăрсăр шартлама.
Мĕнпур çунатлă шанчăк пĕтнипе
Эп хатĕрччĕ пурне те ал сулма.

Такам тĕл турĕ ку çырусене,—
Епле-ха маннă эп вĕсем çинчен?
Ыр чун ăшши вăратрĕ чĕрене:
Çил ăшшăн-ăшшăн вĕрчĕ вĕсенчен.
Тайма пуçах çакна пӳрекене:
Мана юп куракан та пур иккен!

Хĕвшухăшлă хĕрӳ çырăвĕсем
Кĕвĕленеççĕ çепĕç те таса.
Кăвак хуппи пек хӳхĕм кĕвĕсем
Ăçтан, ăçтан тухаççĕ-ши юхса?
Мана çĕклерĕç тӳпене вĕсем,
Вĕçетĕп йыврăша та çухатса.

1

Нимсĕрех ăнлансам,
Ӳпкеве ан юлсам:
Шухăш-кăмăлăма
Уйласа калама,
Ах, чĕлхем çаврăнмасть,
Ах, сăмах тупăнмасть.
Пуçличчен — пинĕпех,
Пĕлтерсе пĕтмĕ пек.
Тытăнсан — хăть пĕри
Асăмра тăтăрин!

Пĕлтерес те килет,
Ăш вĕçсе те илет...
Нимсĕрех ăнлансам,
Ўпкеве ан юлсам.

2

Пĕлетĕн эп сивĕнмессе,
Пĕлетĕп эс сивĕнмессе,
Анчах сайра çыратăн-çке,
Чуна çуратăн-çке.

Эп саншăн тĕмсĕлеттĕмччĕ,
Пыма ĕмĕтленеттĕмччĕ —
Чĕнмерĕн темшĕн аякран,
Епле тўссе тăран?

Ҫурнăçасса сунатăп-ха,
Ҫалаçасса шанатăп-ха:
Юмахлăпăр илемлĕрех —
Ҫилсемччĕ хальтерех.

3

Нихăçан та калаçман
Ҫалаçу нумайччĕ ман.
Ҫилеймерĕн — кураймарăм,
Ҫураймарăм — калаймарăм.

Ҫын сăмахĕ мĕн тумасть?—
Хисепе сана хумасть.
Никама усал сунманччĕ —
Тем пирки инкек капланчĕ.

Мĕн кăтартĕç малашне?
Еплерех тухам вĕçне?

Еплерех пӗлем тӳсмешкӗн —
Телее хуса çитмешкӗн?..

4

Мӗн тӑвам-ши, мӗн тӑвам-ши?—
Шутласа кӑлараймастӑп.
Пӗтӗмпех сана калам-ши?
Қаласан — ырах тумастӑп.
Е хамра çеç хӑварам-ши?
Чӗнмесен те чӑтаймастӑп.

Кутӑруçӑн йывӑр пулчӗ,
Сан пирки пырать хыпарӗ.
Пур ялйыш манран-çке кулчӗ,
Тупсӑмне пӗлсе тӑмарӗ.
Ун çине эс алӑ сулччӗ,
Хуçӑлсах чун хуçӑлмарӗ...

5

Тав тӑватӑп ыр канашшӑн:
Вӗрентен ырра кӑна.
Халӑхшӑн ыр ӗç тӑвасшӑн
Шеллемерӗн эс хӑвна.

Эс пухатӑн пӗрчӗн-пӗрчӗн
Аттесен ӑс-хакӑлне.
Эс хайлатӑн çӗн ӳкерчӗк
Çутатма çынсен чунне.

Пуççапса та пуç çитеймӗ
Тав туса пӗтерейме.
Санпала пӗрле çӗклем-и
Эсӗ йӑтнӑ çӗклеме?

# ÇАРĂМСАН ПЕХИЛĔ

## УÇАП ЕНИПЕ ЫТТИСЕМ

Такмакçă-мыскараçă
Халапçă-юрăççем
Тек пĕтнĕ ĕнтĕ пирĕн,
Тееççĕ хăшĕсем.

Тăхта, тухса курсамччĕ —
Апла каламăн, тен.
Кăштах кăна çӳрерĕм —
Çук мар вĕсем, пĕтмен.

Кайса-çитсе тухан-и
Тимĕрçенсем енне —
Ытараймасăр итлĕн
Эс Уçăп Енине.

Кервен пулмин — тиркеймĕн:
Куç-пуçĕ вичкĕнскер.
Чĕп-чĕрĕ ăмăрткайăк
Сăнарлă-питлĕскер.

Çын сĕмсĕр хăтланать-и,
Сана улталаса,
Е йывăça хăртать-и
Тепри ятарласа,

Е кайăксем-и выçă
Шартламара-мĕнре —
Такмакĕ тухĕ вирлĕ,
Тӳссе кăна çӳре.

Ĕçре чапа эс тухăн —
Пиллет мухтав юрри.

Суя сăмах каламĕ,
Унра — чунра пурри.

Унта пухса шăратнă
Вăл халăх ăс-хални,
Ахальтен мар вĕреннĕ
Вăл кайăк чĕлхине.

Ăна çын варалать-и
Элек пылчăкĕпе —
Чунне уçса кăтартĕ,
Çуталĕ ылтăн пек.

— Апла такмакламашкăн
Мĕскер хистет сана?—
Тесе унран ыйтсассăн,
Вăл калĕ чăн-чăнах:

— Ах, чун чăтмасть чĕнмесĕр,
Епле кĕртен ăса...
Пĕр юрăсăр-такмаксăр
Чун юлĕ пушанса...—

Ун сассипе янрарĕ
Ялйыш калас сăмах.
Ял сценисен илемĕ —
Вăл хывнă такмаках...

Эп Çарăмсан енче те
Итлерĕм вĕсене.
«Дунай юрри» пилленĕ
Пĕри хăй ялйышне.

Юрри салху та вăрăм.
Тахçан вăрçа кĕрсе

Терт курнине вăл чĕррĕн
Қăтартнă ӳкерсе.

Тепри сунтал шаккарĕ,
Хĕрсех такмакласа.
Чĕлхи те ун туптанă,
Тăн панă талпаса.

Тата теприн саланнă
Юрри таçта-таçта.
Ялйыш хуйхи те шӳчĕ
Йĕрленнĕ-мĕн унта...

Ун пек çынра упранĕ
Тăван еткер-тупра.
Эс халăхăн чунне те
Қурмастăн-ши унра?

## ҪАЛМАЙАР

Хăтлă вырăна, Қăлмайăр,
Эсĕ ларнă та иккен.
Пулаймин кунта сар мăйăр,
Ырлăх-çке ытти енчен.

Қӳллӳсем тем чухлĕ санăн,
Хăмăш сăрнă вĕсене.
Чунĕ кăвакал-чарланăн
Қăмăллать-мĕн ку ене.

Пĕвӳсем те сан мухтавлă,
Тикĕс — анлă уй-хирӳ.
Чăн, кирек кама юравлă
Санăн сарлака çĕрӳ.

Ахаль мар-тăр никĕсленнĕ
Тĕрлĕ çын килсе кунта.
Мĕншĕн-ха çак ырлăх енĕ
Юхăнать ку яхăнта?

Вилнĕ çын куç хупнă евĕр
Пушă çуртăн чӳречи.
Чакнă имĕш йыш ĕрчевĕ,
Сахалрах ачи-пăчи.

Шыв урлах çынну çул тытрĕ,
Ах, ан путчăр ăнсăртран!
Çулĕ чăтлăх витĕр выртрĕ —
Юрĕ кашкăр тытмасан.

Ҫӳршĕ-аршă ырă маршăн
Хăвалать-им-ха нуши?
Ку килпетсĕрлĕх таврашĕн
Сăлтавне час тупăн-ши?

Çĕнĕ пĕлĕшĕм Ҫăлмайăр,
Тен, йăшма сунмастăн-ха.
Тен, пурах-и урăх майăр
Упрама тăванлăха?

Пурнăçу пăркалансан та,
Пурăнмашкăн тилмĕрен.
Ҫилĕпех тесе ăсантăм
Ҫурăшмашкăн ӳлĕмрен.

Ёлĕкхи хавал янравĕ
Шăпланман-ха ялйышра.
Çĕнĕ ӳсĕмĕн шыравĕ
Хăртмĕ тарăн тымара.

## УПАМСАР

Çарӑмсанӑн хĕрри Упамсар.
Чун йӑпанчĕ кунта сахал мар.

Сарлака та çеремлĕ урам.
Чунӑма яр уçам та ярам.

Хапӑллать хӑнана ял çынни:
Хыпарлать — мĕн кивви, мĕн çĕнни.

Савӑнсах парнелет ыррине —
Чун-чĕре тĕпĕнчи юррине.

...Шурлӑхри тĕмери çĕрпӳртре
Аптӑратнӑ çĕлен те ӳпре.

Ушахран инçех мар çеçенхир,
Ах, анчах ыйхуна ĕнтĕ сир:

Хирелле ĕçлеме тухсанах,
Тапӑнать хир хурахĕ сана.

Ав, хуралçӑ лерен систерет:
Сӑмала çунтарса тĕтĕрет.

Акапуç таврашне пӑрахсах
Вирхĕнетĕн киле хӑвӑртрах.

Қаçса кĕр те эс ил кĕпере —
Тыт кистен, сыхӑ тӑр хӳтĕре.

Ан çунтарччӑр пур-çук пурлӑхна,
Ан çунтарччӑр лутра кил-çуртна...

Юр юрлаççĕ ялти ватӑсем.
Савнӑç-хуйхӑ чĕртен кĕвĕсем.

Вăйă-кулă, уяв, юрату —
Пурте кĕнĕ-пĕрлешнĕ тату.

Хĕн килсен те, этем хуçăлман,
Чун çути-илемрен уйрăлман.

## ЧАВАШЪЕЛ

Асфальтлă аслă çул хĕрнех
Вырнаçнă пĕр масар.
Ун ялĕ хир тӳремлĕхне
Çĕкленнĕ юнашар.

Пĕр вăрăм ешĕлкке урам.
Улт-çич тирек тăрри
Капмар курнать-мĕн тайлăмра,
Темме хăрать пĕри.

Те çирĕп тăнă ĕмĕртен —
Кĕмен ку ял тĕне.
«Епле кĕмен? Пур хамăр тĕн!» —
Теет тиркекене.

Пин çул каяллахи çынсен
Йали-йĕркипелех
Пурнаççĕ-мĕн кунта хальччен —
Шалтах тĕлĕнмелле!

Этем сăнарлă юпасем —
Вилтăприсем çинче.
Калаççĕ пек пире вĕсем,
Çывăхарах чĕнсе:

«Тăванăм, мĕншĕн куçăмран
Шанмасăр тинкерен?

Ан хăрасамччĕ сăнăмран —
Ķилмен леш тĕнчерен.

Чыслать-çке кӳршĕмĕр тутар
Хăйсен йăлисене.
Мĕскершĕн манăн тытас мар
Аттемĕрсен ăсне?» —

«Апла теме аптрамалла, —
Теетĕп ăшăмра. —
Йышран мĕн-ма уйрăлмалла?
Пĕтетĕн асапра».

Ķуçне илмесĕр куçăмран
Татах калать юпа:
«Тăрса юлманччĕ-ха йышран
Эпир çак йăлапа.

Аттемĕрсем вĕрентнипе
Çитет пархатару,
Ķуратăн ырлăх пинĕпе,
Ĕрчет, пĕтмест ăру.

Выçса-шăнса килекене
Чыс тунă этемле.
Çакна, аттемĕрсен пилне,
Мĕн-ма пĕтермелле?..

Ыйтсамччĕ эсĕ юриех
Тĕл пулнă йĕкĕтрен:
Юпа лартсан — илемлĕрех,
Тесе калать тӳррен...»

«Тавлашмăп, — тетĕп юпана, —
Тухаймăпăр вĕçне.
Ырламалла ăна-кăна,
Пĕлсе хăй виçине...»

Ах, чун йăпатмăш харпăрлăх!
Мĕн чул илемӳпе
Юлма пултарăн хамăрлах,
Шайлашăн тĕнчепе?

Пĕр мар иккен, тепĕр тесен,
Масар уççи-хуппи:
Вут-вăрçăра пуç хунисен
Çут çăлтăрла — юпи.

## СĔНЧЕ ХУЛИ

Сĕнче çыранĕ çӳллĕ,
Çыран тăрри тӳремлĕх,
Тӳремлĕхе тыр акнă,
Ешернĕ вăл сип-симĕс.
Чăш-чаш утса пĕр çиччĕн
Сĕл пуссинче çӳреççĕ,
Тем-тем тупса сăнаççĕ,
Нихçан курман пуянлăх
Тĕл пулнăн тинкереççĕ:
Чарнаççĕ сывлама та,
Чăл-чал çиçет куçпуçĕ.
Чӳлмек ванчăкĕсем те,
Йĕрĕлчесем те пур-мĕн,
Тупаççĕ шăмăшсем те,
Пур тимĕр хатĕр-хĕтĕр.
Çич-сакăр ĕмĕр ĕлĕк
Кунта мĕнле хула-ши
Шавланă та кун курнă?
Тăшман килсе çапсассăн,
Епле вĕсем сыхланнă?
Мĕнле асап тӳссе-ши
Тĕм-тĕкĕрех тĕп пулнă?

Пӳлер-Сӑвар юлташӗ
Пулнах-тӑр ҫак хуламӑр
Тесе пӑшӑрханатӑн.
Хӳме палли юлайнӑ —
Тӗмеленсе выртать вӑл.
Ҫыруллӑ чул юпа та
Ун-кун кӑштах упраннӑ,
Унта — «ыр ҫыннӑн» ячӗ.
Чӳлмекӗн ванчӑк тӗпӗ,
Йӗрӗлчепе сар шӑмӑ
Тахҫан кунта ҫӳренӗ
Йыш тав-шавне хускатрӗҫ,
Инҫе ертсе каяҫҫӗ
Аваллӑх ҫулӗ тӑрӑх.
Пӑлхар-Сӑвар тӑшманӗ
Алхаснӑ-тӑр кунта та.
Тен, ҫак сӑрта хӑпарнӑ —
Тен, пӗрене кустарнӑ
Вӗсем ҫине сӑварӗ.
Ҫурт-йӗр, чикме хӳме те
Шарт-шарт! ҫунса кӗлленнӗ,
Ҫичют вут хыптарсассӑн.
Ҫынсем те пӗтнӗ ӗнтӗ,
Вилнех-тӗр чикӗшсе те —
Тӑшман кулли пулмасӑр.
Пинтен пӗрин кӑна, тен,
Май килнӗ хӑтӑлмашкӑн.
Шӑпах, тен, вӑл пулайнӑ
Мӑн асаттем тавращӗ?..

## ÇАРĂМСАН

Çавранса юхать-и Çарăмсан,
Хăмăшĕ саламлăн пуç таять-и —
Кăмăлу та çамрăкланĕ сан,
Çĕнĕ кĕвĕ чĕрÿнте хускатĕ.
Шухăшу вĕçет çавна кура,
Çарăмсанăн улăхĕ пек аслăн.
Сарлака çаранлăх асăмра
Ĕлĕкхи куна чĕртет пин саслăн.
Ахаль мар тымарăмăр малтан
Çакăнта ÿссе парка хунанă.
Ахаль мар ку вырăн авалтан
Юрă-халапа кĕрсе янранă.
Ахаль мар-им илнĕ ку енче
Шелепи халапĕсен сулмакĕ.
Çавăнпа кунти хир уççинче
Çепĕçрех янрать юрри-такмакĕ.
Çавăнпа кунта чĕлхемĕре
Хĕрÿрех те юратма пĕлеççĕ.
Çавăнпа ку ен парать пире
Харсăр сăвăç, çивĕчĕ чĕлхеçĕ.
Сĕвепе Çавалăн ырлăхне
Çарăмсанăн шывĕнче те курăн:
Ытарми аннемĕр пехилне
Чăпăл тунă май парас шут пур ун.
Çарăмсанăм. Кулленхи ĕçре
Пулăшу пиртен кирлехчĕ пулĕ.
Килтĕм, куртăм, саврăм ку çĕре,
Пехилÿшĕн ĕмĕр парăм юлĕ.

# КУÇАРУÇЕМ

## ДУ ФУ (712—770)

### ЫЛТАН ÇАМРАКСЕНЕ

1

Çĕр çыннин хытанка
Аллисем тытакан

Кивĕ тăм кăкшăмран,
Эй, ан кулăр нихçан!

Ачасем, мăнуксем
Ӳссе çитĕнчĕç ман —

Кулленхи пурнăçра
Пулăшать вăл ялан.

Сирĕн сават-сапа
Çуталать кĕмĕлпе,—

Йăпăлтатĕ хăна,
Мухтаса ун чапне.

Пурпĕр пурте эпир
Ӳсĕрлетпĕр пĕр пек,

Йăванатпăр пĕрлех
Çĕрлехи çĕр çине.

**2**

Вĕлтĕрти чĕкеçсем,
Йăвине пăрахса,

Тӳпери çулĕпе
Ќайрĕç ăшă енне.

Ќун çитсен, чечексем те
Лараççĕ хăрса —

Çеçкипе илĕртме
Çути çук малашне.

Шухă шухăшлă та
Сарă тумлă яшсем,

Ќилсе курăр кунта
Çутçанталăк сăнне:

Ăнланайăр,— çитеймĕç
Эпир кĕтнисем.

Курăр чăрсăр шывсем
Шавласа юхнине.

# ПАЛАН

Юханшыв хěррине
Эс анаймăн нихçан —

Ăшаланă сана,
Лартнă ěнтě çимешкěн.

Хÿтлěхе пытанма
Ěлкěрмерěн пулсан,

Ķирлě мар халě тин
Ўкěнмешкěн-йěмешкěн.

Ěлěкрен-авалтан
Шелсěр, хăтсăр тěнче:

Илеме паян кун
Инкекре тертлентерěç.

Çавăнпа уявра
Ўлпутсен умěнче

Сěтеле тěс кÿрен,
Вакласа хунăскерěм.

## ПОПУГАЙ

Пурнăçне асилсе,
Попугай кулянать:

Мĕн пулни-иртнине
Астăвать пĕтĕмпе;

Ҫапăр тĕкĕ кĕскелчĕ,
Ҫунат усăнать;

Уссине курма çук
Ҫалаçма пĕлнипе.

Алăка уçасса
Пурпĕрех вăл кĕтет.

Юратсан та, ăна
Ҫын тытать читлĕхре.

Пĕр-пĕччен çĕ турат
Вăрманта ĕнтĕркет.

Попугайăн илемĕ
Типет пӳлĕмре.

## АБУ АЛИ ИБН СИНА
## (980—1037)

### РУБАЙСЕМ

* * *

Хӗрмесӗр, ӑнтӑлмасӑр пурӑнаймӗ чун.
Васка: харкам самантшӑн вӑй хурасшӑн ҫун.
Ан ил юратӑва укҫан, ят-сум ан ыйт.
Ҫам телее хакламӗ — ҫулӗ нӗрсӗр ун.

* * *

Намӑс — сывах пурӑнуҫӑн юлсан тӑр-пӗччен,
Хӑв халиччен тунине тиркесе ӳкӗнсен.
Вӑй ҫитнине паянах, пӗтӗмпех эсӗ ту,—
Тен, нихӑҫан та тӑраймӑн эс вырӑн ҫинчен.

* * *

Эпӗ ӑнкартӑм сӑмах асамне,
Тупрӑм тӗнчен тупӑнман тупсӑмне.
Ҫитнӗ-ши эпӗ хама ӑнкарса?
Пӗлтӗм хам ним те пӗлмен иккенне.

* * *

Пӗр вӑрттӑн пӗлӗве пултартӑм тӗшмӗртме,
Пултартӑм тамӑкран тӳпе таран ҫитме.
Ҫӗмерӗм ултава, эп сӳтрӗм пур тӗвве,
Пӗр вилӗм тӗввине ҫитмерӗ хал сӳтме.

# АБУЛЬ КАСИМ ФИРДОУСИ
# (934-941 — 1020 ç. тĕлĕ)

## ĂС-ХАКĂЛА МУХТАСА ҪАЛАНĂ САМАХ

*(«Патшасен кĕнекинчен»)*

Ĕнтĕ кун ҫитрĕ сăмах пуҫламашкăн —
Ăс-хакăла мухтаса каламашкăн.

Чăн шухăша ҫеҫ пĕлтертĕр пĕлӳҫĕ,
Ырă канаш ҫеҫ илтейтĕр илтӳҫĕ.

Ăс-хакăл пек чи хакли, ай, мĕн пур-ши?
Ăс-хакăла ҫитекен ыр ĕҫ пур-ши?

Пĕтĕм чĕрчунăн илемĕ — ăс-хакăл,
Пурлăх та пурнăҫ вут-хĕмĕ — ăс-хакăл.

Чун-чĕрере вăл — ҫĕрте те, ҫӳлте те.
Ҫӳрĕ ертсе вăл сана пур ҫĕрте те.

Ырă кунҫул курасси — унран килĕ,
Аслă ята илтесси — унран килĕ.

* * *

Ҫак ҫĕр ҫинче камăн чунĕ сăваплă,
Уншăн пулсассăн ăс-хакăл чи хаклă.

Аслă ҫынсем ак мĕнле халапланă,
Тӳрĕ ĕҫе юратма халалланă:

«Шухăшламасăр ĕҫе пикенен те,
Ĕҫĕ ăнмасть те — вара ӳкĕнетĕн.

Эсĕ вара ухмантей шутланатăн,
Çывăх çынсемшĕн ютта çавранатăн».

Ĕмĕр чыс курăн — ăса пуç тайсассăн,
Ĕмĕр терт курăн — ăспа ют пулсассăн.

Çутă ăсу — чун-чĕрÿн витĕр куçĕ,
Ăслă тĕнче тавралла вăл çул уçĕ.

Чи малтанах кун куранĕ — ăс-хакăл,
Чун-чĕрене сыхлаканĕ — ăс-хакăл.

Куç та, чĕлхе те, хăлха — ыр управçă.
Санăн чунна çавсемех палăртаççĕ.

Ăс-хакăла хисепе кам кăларĕ?
Эс кăларсан та — кама савăнтарĕ?

Çутă ăса ĕненсе эсĕ пурăн,
Çутă ăса сивлемесĕр эс пурăн.

Мĕн ачаран ăс пухмашкăн эс тăрăш,
Ăс шыраса, эсĕ ут тĕнче тăрăх,

Мĕн илтнине хыпарла эс пурне те.
Тĕплĕн тĕпче эсĕ ăс тымарне те:

Ăс йывăççин туратне çеç тĕпченçĕ —
Чи кирлине тишкерсе пĕлейменçĕ.

# ЛИ ЦИН-ЧЖАО
# (1084—1151)

## ХРИЗАНТЕМА

Си-си ӳссе хăпарнă çулçусем,
Вĕсен çӳçийĕ, калăн, яшмăран.
Вĕсен пин-пин çеçки умра ялтрать
Шăратнă ылтăн пек хитрен-хитрен...
Эй, хризантема, эй, кĕрхи чечек,
Хăв евĕрскер, эс танлă курăнан,
Хастарлă арăн çивĕч кăмăлне
Асилтерен.

Ларин халь мэйхуа та чечекре,
Çапах та унăн тумĕ чухăнрах.
Хуплатăр-и çеçки те сирене —
Унран та эсĕ ĕлккенрех тăран...
Эс ним те хĕрхенместĕн-çке мана —
Ыр шăршуна кӳретĕн ытлăнах,
Инçе çĕрти çынна асăнтарса
Хурлантаран.

* * *

Шаннӑ лотос чуна савӑнтармӗ,
Эп унра кӗр сӑнне асӑрхатӑп.
Шухӑша путнӑ май салтӑнатӑп,
Ҫим ҫинче пӗр-пӗччен ҫӗр каҫатӑп.

Ҫӳл хӳме тӑрринче ҫутӑ уйӑх,
Шурӑ пӗлӗт шӑвать хушшӑн-хушшӑн.
Те ҫыру пӑрахасшӑн хуркайӑк —
Ҫӑшкӑрашрӗ ҫӗрле те пӗр ушкӑн.

Туратсем чечекне сапалаҫҫӗ,
Вӗсене хум инҫе хӑваларӗ.
Уйрӑлса пурӑнма тӳр килсен те,
Шухӑшра пӗр пулма кам-ха чарӗ?

Тунсӑх-юншӑх манран пӗр самант та
Сирӗлме-сӗврӗлме пикенмерӗ.
Куҫ харшийӗм ҫинчен хӑваларӑм —
Сӑннипе чӗререн вӑл чикейрӗ.

# ИОГАНН ВОЛЬФГАНГ ГЕТЕ (1749—1832)

## МАРГАРИТА МОНОЛОГĔ

*(«Фауст» трагедирен)*

Мĕскер, мĕн амак-ши?—
Эп сĕрĕмри пек.
Ыр канăç курмашкăн
Пĕлместĕп-çке тек.

Савниçĕм çĕтет те
Таçта аякра —
Эп хам ăçтине те
Туймастăп вара.

Мĕскершĕн çапла вăл?—
Çӳретĕп аран.
Пуçра йăлт пăтравлă
Чĕрем çуннăран.

Мĕскер, мĕн амак-ши?—
Эп сĕрĕмри пек.
Ыр канăç курмашкăн
Пĕлместĕп-çке тек.

Ларатăп пĕр вĕçĕм,
Пăхса кантăкран.
Алла тытас ĕçĕм
Пачах хускалман.

Ќаллех тĕлленетĕп
Эп ун уттине,

Мăнаç куллине те
Асамлă куçне.

Манпа калаçать вăл,
Чуна тухатса.
Вут пек хăратать вăл,
Хĕрӳ чуптуса.

Мĕскер, мĕн амак-ши?—
Эп сĕрĕмри пек.
Ыр канăç курмашкăн
Пĕлместĕп-çке тек.

Епле лăпланас та
Епле тĕл пулас?
Епле ыткăнас та
Тытса ыталас?

Вара йăлт манайăп,
Унпа çеç юлса —
Ан тив, çухатайăп
Пуçа та чыса.

# РОБЕРТ БЕРНС
# (1759—1796)

* * *

Эс мана пăрахрăн, Джеми,
Эс мана пăрахрăн,
Ĕмĕрлĕх пăрахрăн, Джеми,
Ĕмĕрлĕх пăрахрăн.
Эс манпа, савни, шӳтлерĕн,
Илĕртсе калаçрăн,
Виличчен юратăп терĕн,
Ху кайран пăрахрăн, Джеми,
Ху кайран пăрахрăн.

Эп санпа пулаймăп, Джеми,
Эп санпа пулаймăп.
Малашне нихçан та, Джеми,
Эп санпа пулаймăп.
Вĕçсĕр канăçа чĕремĕм,
Ах, хăçан-ши тупĕ?
Куçăма вара эп хупăп,
Ĕмĕрлĕх эп хупăп, Джеми,
Ĕмĕрлĕх эп хупăп.

## ЮРА

Эс шăхăр — эп тухăп
Сана хирĕçех,
Эс шăхăр — эп тухăп
Сана хирĕçех.
Атте те аннеçĕм
Ятлаччăрицех,
Эс шăхăр — эп тухăп
Сана хирĕçех.

Атте те аннеçĕм
Сиссе юласран
Кĕрсем ман пата эс
Хыçри крыльцаран.
Çурт тепĕр енче —
Çав тепĕр крыльца.
Килсем — ман пата эс
Килмен пек пулса.

* * *

«Эс — тăмана» тесе мана,
Хăвна хăвах хур турăн:
Манра эс хăв сăнна кăна
Тĕкĕр çинчи пек куртăн.

## МИХАЙ ВЕРЕШМАРТИ
## (1800—1855)

### КИЛ-ҪУРТСАРСКЕР

«Эс ютшăнатăн ҫынсенчен,
Ҫӳрен ҫил витĕр сĕм-пĕччен
Сĕм-тĕттĕм каҫхине.
Эс уямастăн ҫул-йĕре.
Мĕн хăвалать ҫак тĕнчере
Сана тусем ҫине?»

«Ан чар — ҫӳрем чул ту ҫинче,
Ан чар — танккам ҫил уҫҫинче,
Эп — килсĕр-ҫуртсăрскер.
Пуш-пушă чун-чĕре сурать,
Унта ҫавраҫил ҫеҫ урать,
Инкекĕм ман тискер».

«Тен, пулнă эс унччен пуян?
Кĕсйӳ якалчĕ-им паян?
Пурнатăн тертленсе».—
«Чăнах, ыр куртăм пурнăҫра,
Ана ӳпкевĕм ҫук вара —
Лармастăп ӳкĕнсе».

«Тен, тус-юлташ е хĕр-пике
Сана хăварчĕ инкеке —
Хур турĕ ҫăхавпа?»—
«Ун пек тус-пĕлĕш ҫукчĕ ман,
Мана вĕсем нихҫан сутман —
Куҫ хупрĕҫ хуйхăпа».

«Тен, хăвăн пĕтĕм килйышна,
Ҫумри чи ҫывăх юлташна

Ӑсатрӑн масара?»—
«Мӗн юратни тӗп пулчӗ ман,
Анчах эп хуҫӑлса анман—
Тӳсейрӗм йывӑра».

«Тен, эсӗ чыс-хисеп чури?
Хӑвна хур тунӑшӑн юри
Халь тавӑрасшӑн, тен?»—
«Ыр ятӑм пӗтрӗ тӗппипе,
Ҫапах та тӳсӗп пӗтӗмпе—
Тӑван ҫӗршыв тесен».

«Тен, хӑв ятна варланӑран,
Сӑлтавсӑрах хурланӑран
Ҫӳретӗн ют ҫӗрте?»—
«Ӑн тив, хурлаччӑр хӑр та хар,
Ҫӗршыв ешертӗрччӗ хастар—
Курам мӗнпур терте.

Ҫунтарчӗҫ ман ҫӗршывӑма,
Салатрӗҫ ман халӑхӑма
Хаяр ҫапӑҫура.
Юратнӑ халӑх тертленни,
Тӑван кил-ҫуртӑм кӗлленни
Ҫурать ман кӑкӑра».

## ЁМЕТ

Эсĕ юратсан —
Парăттăм чуна,
Танлă ĕмĕте татăп шеллемесĕр;
Пĕтĕм ăс-хала ним ўпкелешмесĕр
Ҫўрĕттĕм сана —
Эсĕ юратсан.

Эсĕ юратсан —
Ҫаврăнăп ҫулҫа,
Пулăп эп турат, йывăҫ пулăп, ўсĕп;
Ҫунăп ҫиҫĕмпе, сив хĕле те тўсĕп,
Шăнăп хĕл каҫа —
Эсĕ юратсан.

Эсĕ юратсан —
Пулăп та вулкан,
Хĕрлĕ ҫулăмпа ҫунăп-ҫулăмланăп;
Пытарса хуйха, канăҫсăр хумханăп,
Пулмĕ хуплакан —
Эсĕ юратсан.

Эсĕ юратсан —
Чунăм тухсанах,
Ҫаялла пама эп тархаслăп-ыйтăп;
Хўхĕм сăн кўрсе, эп упрайăп, тытăп,
Парăттăм санах —
Эсĕ юратсан.

# ЭЛИАС ЛЕНРОТ
# (1802—1884)

## КАЛЕВАЛА

### ЮРАÇСЕН АМАРТАВĔ

Вяйнямейнен хуравларĕ:
«Эс мана парăнтараймăн
Хĕçӳпе те, ăсупа та,
Сăннупа та, ултавпа та.
Санпала çапах та, йĕкĕт,
Хĕç тытса эп çапăçмастăп».
Еукохайнен, тăнласассăн,
Ҫутăнлашрĕ те шăл çыртрĕ,
Тарăхса пуçне вăл усрĕ,
Ҫаплалла сăмах каларĕ:

«Ҫам хĕçпе тухма шутламĕ,
Аманмашкăн та шикленĕ,
Юррăмпа ăна тухатăп,
Пулĕ вăл сысна пек выльăх.
Вĕсене салатăп ярăп,
Тĕрлĕрен çĕре пытарăп,
Тислĕкпе варалăп-сĕрĕп,
Витене хупса тăратăп».

Вяйнямейнен та çилленчĕ,
Ҫиллинчен вăл намăсланчĕ.
Вăл хаяррăн юрламашкăн
Авалхи юрра пуçларĕ,
Ачапчасенне тиркерĕ,
Сар хĕрсен шӳтне сивлерĕ,
Ар юрри янратрĕ хыттăн.

Ĕнкăссăн çĕкленчĕ юрă —
Кăпăкланчĕ кӳлĕ шывĕ,
Таврари çĕр чĕтĕрерĕ,
Пăхăр ту тăрри силленчĕ,
Чул тусем икке пайланчĕç...

Чарăнмарĕ Вяйнямейнен —
Майĕпен Еукохайнен
Шурлăха пута пуçларĕ:
Пĕç таран вăл лакрĕ ларчĕ,
Пилĕкĕ таран та çитрĕ,
Акă мăй таран вăл путрĕ.

## ЛОУХИ САМПО ШЫРАТЬ

Лоухи, Похьола ҫĕрĕн
Аслă пуҫлăхĕ — ват карчăк,
Ват ҫынна йăтса тăратрĕ,
Кимĕ ҫывăхне ҫитерчĕ,
Ун хӳри ҫине вăл лартрĕ,
Кĕсменне вара хăй тытрĕ,
Авăсса пыма вырнаҫрĕ.
Тĕксĕм Похьола ҫĕршывĕн
Ҫыранне ҫитсе ансассăн,
Ют ҫынна пӳрте вырттарчĕ.

Ытлă-ҫитлĕ тăрантарчĕ,
Тумтирне типмешкĕн ҫакрĕ:
Пайтахчен малтан чӳхерĕ,
Ват ҫынна шавах йăпатрĕ.
Кĕҫ ăна чиртен вăл чĕртрĕ.
Халсăр ҫын вăй хушрĕ — тăчĕ,
Унпала калаҫрĕ карчăк:
«Тĕксĕм ҫырана тухсассăн,
Тинĕс хĕрринче мĕскершĕн
Макăртăн эс, Вяйнямейнен?»

Аслă, ватă Вяйнямейнен
Карчăка ҫапла каларĕ:
«Хам ҫĕршывăма пăрахрăм.
Ҫичĕют ҫĕрне эп ҫитрĕм,
Ют кил-ҫурт умне уттартăм,
Алăкĕ умнех ҫывхартăм.
Хурланма ҫеҫ пӳрнĕ ĕнтĕ
Малашне мана пĕр вĕҫĕм.
Йывăҫсем кунта сăхаҫҫĕ,
Лăс йĕппи чикет хаяррăн,
Хăваларĕ йăрăс хурăн,
Ҫӳҫисем ҫапаҫҫĕ вирлĕ.

Сухаланă пултăр хирĕ —
Умăмра кĕтет ют алăк».

Лоухи, хуçа-тухатмăш,
Çаплалла вара каларĕ:
«Ан кулян эс, Вяйнямейнен!
Тунсăхна сирсем, Уваниолайнен!
Пуранăн кунта эс чаплă:
Сывă, тутă та хаваслă.
Çи — лосось çиес килсессĕн,
Çи сысна ашне те эсĕ».

Килĕшмерĕ Вяйнямейнен,
Карчăка çапла каларĕ:
«Йĕр çинчен ĕçсессĕн те,
Шывĕ тутлă-çке килте.
Ылтăн саватран-и пулĕ —
Тутлă мар çичютăн пылĕ».

## ЯН КАСПРОВИЧ
## (1860—1926)

### «ЧУХАНСЕН ҪЕНЕКИНЧЕН»

### XIV

Тата, тӳррипе каласассăн,
Хыпмастăп вилесшĕн питĕ.
Мăн ҫулпа е сукмакпа-и —
Хăех ман пата вăл ҫитĕ.

Вара чăркăшмасăр ăнкарăп,
Ҫам тавлашса ăнлантарĕ:
«Ҫирек те ăҫта чавсан та
Виле шăтăкне—пурпĕр мар-и?..»

Ҫапах та вилмешкĕн тивĕ,
Вăл кун ҫитессе туятăп.
Ӳтĕм валли пĕр-пĕр вырăн
Тупмашкăн сиртен ыйтатăп.

Тăванăм-пĕтенĕм, тус-йышăм,
Тархасшăн, ан манăр эсĕр:
Ман мĕскĕн ӳтшĕн, чăнах та,
Чăрмавлă ан пулăр виҫесĕр.

Мана тупăка хурсассăн,
Лав ҫине хуллен лартăр.
Пехиллĕн чун илнĕскершĕн
Лав кӳмерен кая мар-тăр.

Хамшăн тата теприншĕн —
Пурăннăн икĕ ĕмĕр —
Лавăм чаплăн та сумлăн
Хускалтăр кайтăр, туссемĕр.

Эп ырă куна ĕмĕтленнĕ,
Çĕрте кĕмĕл сывлăм çуталтăр,
Çав вырăнтах иркӳлĕм
Тарăн шăтăк, ай, алтăр.

Пит ырă тăвăттăр маншăн —
Мана кирлĕ мар урăх вырăн.
Çыр хĕрринче шывĕ кĕрлĕ,
Хуралçă пек туйăнĕ ыррăн.

Хĕвел хĕртсе пĕçертетчĕ,
Çыранăн хĕрри сакăлтакчĕ.
Унта эпĕ тăтăш сăнаттăм:
Шыв шавласа тулашатчĕ.

Тен, çул хĕрринче кĕтес тупăр,—
Ах, ĕмĕтĕм ман мăнаçлă.
Ӳкен çăлтăра тытаттăм
Кунта эпĕ ирлĕ те каçлă.

Манран йăлăхман пулсассăн,
Сирĕн пурах-тăк ирĕк —
Ман тăпрам çине лартăр
Ик чăрăш та икĕ çирĕк.

Вĕсем калаçма пуçласассăн,
Нимрен те ытла савнаттăм:
Асамлă сăмах е сасă —
Уншăн вилсех каяттăм.

Турă мана пăрахăç тăвĕ —
Пулăп тăпра вăраххăн.
Пурĕпĕр эпĕ шанатăп:
Туррăм, чуна пăрахмăн.

Тен, çавна май ирĕк парĕ
Хăшпĕр чухне таврăнмашкăн —

Çак хирпеле çул тăрăх
Татах курса çаврăнмашкăн.

Тăпрам çине вара çитĕп.
Çӳл çирĕк ăшшăн-ăшшăн
Ешĕл чăрăшпа калаçĕ,
Тайăлĕ ачашланасшăн.

Хам элчелрен иртеймесĕр
Пурпĕр вилессĕм умра-тăк,
Эпĕ сиртен тархаслатăп
Ыраш çăкăрне пĕр татăк.

# АЛЕКСАНДР БЛОК
# (1880—1921)

* * *

Эсир, чухӑнскерсем,
телейсӗрсем.
*Лир*

Ах, мӗн тери йӗри-тавра
Ҫил-тӑвӑл тулашать хаяррӑн,
Хупларӗ ҫумӑр хуп-хура,
Йӑлтах шӑнса кӳтме пултарӑн.
Хӑрушӑ каҫ! Ҫил шӑхӑрать.
Ҫил-ҫуртсӑр ҫынсене шеллетӗп.
Мана ҫак туйӑм йыхӑрать
Тухса чупмашкӑн сӗм-ҫӗрле те.
Сиресчӗ урнӑ ҫумӑра.
Ҫын асапне пӗрле пайласчӗ!
Ах, мӗн тери йӗри-тавра
Ҫил ачисем паян шавлаҫҫӗ!

* * *

Эпир пӗрлеччӗ санпала...
Пӑлханчӗ каҫ, тӑмра юрлатчӗ...
Манпаччӗ эсӗ чунпала,
Илемленсе сӑну пыратчӗ...
Шаркарӗ шывӗ ҫырмара,
Пикем, ытарлӑн йӑл кулаттӑн.
Тӑмра сас пачӗ чунӑмра,
Эс чуптӑвасшӑн ӑнтӑлаттӑн...

## ФАБРИКА

Сар тĕслĕ ун чӳречисем.
Ҫаҫ пулсанах — ҫаҫ пулсанах
Хăлтăртатаççĕ болчĕсем,
Çынсем сырнаççĕ хапхана.

Хапхи хупах, кĕрнеклĕскер.
Хӳме çинчен — хӳме çинчен
Пĕр хураскер, хускалмискер,
Шутлать çынсен шутне темччен.

Илтетĕп çӳл çуртран йăлтах:
Сасси ун хытă, тăкăска;
Чĕнет авмашкăн çĕр хута
Тертпе ĕшеннĕ шăмшака.

Кĕрет те халăх саланать,
Темскер йăтать вăл чăптапа.
Сар чӳрече хуçи савнать
Улталанишĕн йӳн хакпа.

## САПКА ЮРРИ

...Ҫăлтăр чĕлтĕр хĕм сапать.
Шăнкăр шыв сиксе чупать.

Пăхрĕ уйăх пӳлĕме,
Хушрĕ тĕлĕк тĕлленме:

«Ҫыврăр, ҫыврăр ҫĕрĕпе,
Вăрататать пиччем ирпе.

Ун тумтирĕ ылтăнран,
Кĕмĕлтен тумтирĕм ман...

Қаҫ пулать — пиччем ҫыврать,
Вăл мана вăййа ярать.

Пуҫлăп та юмах яма —
Тытăнăн ыйхăлама.

Ҫӳрĕр тутлă тĕлĕкре,
Эп сыхлатăп халь сире...

Қаҫ пулсассăн, ачасен
Ҫывăрмалла мĕн ирччен...»

* * *

Пурӑнӑҫ карапӗ
Ларчӗ ӑшӑха.
Ҫӑшкӑрать рабочи —
Хупланать хӑлха.
Юрӑ та шӑй-шайлӑх
Шыв инҫетӗнче.
Сӑр сӑхманлӑ паттӑр,
Ав, карап ҫинче.
Вӑл руле хускатрӗ,
Ҫарчӗ парӑса.
Пакурне пӑрахрӗ,
Тӗкрӗ вӑй хурса.
Хай карап тапранчӗ,
Хӗрлӗ йӗрлӗскер.
Юхайса юлайрӗ
Чӑпаркка ҫурт-йӗр.
Ав карап ӑсанчӗ,
Савнӑҫлӑн ишсе.
Ҫук, пире, тӑванӑм,
Ҫаймӗ вӑл илсе.

* * *

Юр айёнче питĕ тертлĕччĕ
Хĕл каçиччен çывăрма...
Шăннă çĕре плуг чĕлтерĕччĕ —
Вăйĕ çитмест хайăрма!

Сывлăмлă ир шăрçалантăр-и —
Утăпăр улăх енне...
Çивĕч çава вĕл! вылянтăр-и —
Çулăпăр ун утине!

Йывăр хапха ĕнтĕ уçăлнă!
Сиплĕ çил кĕчĕ пӳрте!
Хурлăх юррин ури хуçăлнă —
Савнăç вĕрет халь пирте!

* * *

Пăшăлтатрĕ асамлă тута,
Ĕнтрĕкре эсĕ чупрăн сада,
Тăкрăн шурă чие чечекне,
Янратса яш чĕрӳ саламне.
Унтанпа кунсерен, каçсерен
Асăмра варкăшса эс çӳрен,
Шур чечекĕн шăрши пуç çаврать,
Çут пĕве хăй патне йыхăрать,
Янкăр тăрă каçсем çывăха
Çывхартмаççĕ хуйханнă ыйха.

## РУСЬ

Эс тĕлĕкре те тĕлĕнтермĕш.
Эп сĕртĕнмĕп сан тумтире.
Çак вăрттăнлăх ыйха вĕçтермĕ —
Çывратăн, Русь, тĕлĕкĕмре.

Сана шывсем пиçиххиленĕ,
Хупла тăраççĕ чăтлăхсем.
Шурлăхсене тăрна иленнĕ,
Асамлă, тĕксĕм — куçусем.

Кунта çĕр те пĕр тĕрлĕ халăх.
Вĕсем çĕршыв талккишĕнче
Карталанаççĕ пĕр хаваллăн
Каçхи çунан ял çутинче.

Кунта тырпулă ăрăмлаççĕ
Ăрăмçăсем, пĕлӳçĕсем.
Юр юписем çинче выляççĕ
Усалсемпе тухатмăшсем.

Кунта пӳрте тăман витейĕ,
Çурт çунатти таран çуса.
Хаяр тусне таврасчĕ тейĕ —
Хĕр ларĕ çĕçĕ хăйраса.

Кунта çул-йĕр ырхан выртать-и —
Вăл тӳснĕ çыннăн асапне,
Турат çинче çил шăхăрать-и —
Юрлать аваллăх халапне...

Тĕлĕкĕмре çапла куратăп
Çуралнă çĕрĕм юрлăхне.
Ун çĕтĕк тумĕпе упратăп,
Хуплатăп чун çаралăхне.

Çĕрле кичем сукмак йĕрлетĕп
Вилтăприсем патне çитме,
Масар çинчех эп çĕр çĕрлетĕп,
Юрлатăп юррăм-кĕввĕме.

Кам кăмăлне шăранчĕ юррăм,
Мĕнле хĕре чун саврĕ ман,
Мĕнле турра чунтан тав турăм —
Ăна эп хам та тавçăрман.

Сып-сыв чунна чуччу сиктертĕн,
Русь, эсĕ хăв чĕрçӳ çинче.
Таса тытса, хальччен çитертĕн
Ăна кунçулăн тертĕнче.

Çак вăрттăнлăх ыйха вĕçтермĕ —
Çыврать-ха Русь тĕлĕкĕмре.
Вăл тĕлĕкре те тĕлĕнтермĕш.
Эп сĕртĕнмĕп шур тумтире.

* * *

Сăнна чип-чиперех паллатăп,
Пĕрле тӳр килнĕн пурăнма.
Килте, унта-кунта пулатăп —
Черчен мĕлкӳ тухать ума.
Шак-шак утса хыçран пыратăн,
Ăçта кĕрем — унта çӳрен.
Эс мар-и вăл мана шыратăн,
Ялан йĕрлетĕн каçсерен?
Эс мар-и вăл вăштах иртетĕн,
Эп алăкран пуç чиксенех?
Çăп-çăмăл куç курми çĕтетĕн,
Тин çеç ыр тĕлĕк пĕтнĕнех.
Шутлатăп: эсĕ-ши ларсаттăн
Йĕтем леш ен масар çинче?
Шур çитсă тутăрпа пырсаттăн,
Пуç тайнăччĕ тĕм умĕнче.
Эп çывхараттăм — шав ларайрăн,
Эс утрăн — эп умна çитсен,
Шыв хĕррине анса юрлайрăн.
Сан çепĕç сассуна илтсен,
Чансем сас пачĕçĕ нумайййăн,
Эп йĕтĕм, кĕтрĕм çул çинче.
Чансен кĕвви шăпланнă майăн
Сассу та йăнрĕ леш енче.
Самант — хайхи мĕнпурĕ иртрĕ,
Тутру вĕлтлетрĕ çухалса.
Çапах пĕлетĕп тертлĕх витĕр
Сана татах тĕл пуласса.

* * *

Пехил сана, ман иртнĕ кунăм,
Кĕтмен кунтан эп ыррине.
Мĕн чул-ши эс юратрăн, чунăм,
Мĕн чул-ши, ăсăм, çунтăн эс?

Хыçа йӳçеккĕн йĕрленсен те
Телейĕмпе асапăм ман,
Пĕччен юлса çунма тивсен те,
Хам çуттăма эп хавшатман.

Çĕн туртăмпа-и хĕн кăтартрăм —
Қаçар. Шăпамăр — пĕр пулма.
Сăнарунта кăна ăнкартăм
Ятне пама çук туйăма.

Пăхатăн-и эс куç илмесĕр —
Шур юрлă каç сив тĕттĕмре
Хăй çулĕнчен пĕр сикленмесĕр,
Пăлханчăклăн тапать чĕре.

* * *

Кун мар-ҫке кун, ҫул мар-ҫке ҫулӗ
Ҫак выҫӑ, чирлӗ пусмӑрта.
Уй-хир хӑҫан-ши тулӑх пулӗ,
Хӑҫан лӑш сывлӗ халӑх та?

Ҫу ҫитнӗн сӗрешет пур курӑк,
Пӗр лӑпланать, пӗр ухӑнать.
Ҫӗрле те ун хуйхи ҫук урӑх —
Чечекленесшӗн хумханать.

Ҫак ҫӗр илемӗн чапӗ — халӑх,
Чи хитререн те вӑл хитре.
Эпир те ирӗк сывламалӑх
Ҫу кунӗ ҫитетех пӗрре.

## ҪЕРЕМЛЕХРЕ

Янках курнать вӑрманӗ,
Тӳпе те янкӑрах.
Уй-хирӗн те йӑранӗ
Халь ӗнтӗ хурарах.
Ҫеремлӗх те вӑраннӑ —
Шӑв-шавӗ хытӑрах.

Килет иккен ҫур кунӗ,
Хӑй ӑҫтарах тата?
Янрав тӑрать ун-кунӑн,
Тен, вӑл йӑнкӑртатать?
Ҫук, ҫук, шыва чун кӗнӗ,
Васкать, шӑнкӑртатать...

* * *

Эсĕ манăн сукмакăм çинче
Питĕ çивĕччĕн, питĕ хӳхĕммĕн тăратăн,
Анчах питĕ ырнăн курнатăн,
Шав хурлăх çинчен калаçатăн,
Вилĕм-çĕтĕм çинчен шухăшлатăн,
Никама та савмастăн,
Хăв чуну илемне уямасăр тăратăн —
Сана кӳрентерĕп-и çак самантра?

Ах, çук! Хусах-пусах мар эпĕ,
Суеçĕ те мар, вĕскĕн те мар,
Пĕлĕпин эпĕ темĕн те,
Шухăшлă çӳрĕпин эпĕ мĕн ачаран,
Шухăшлăп хамăн ĕçĕм çинчен çеç ялан,
Çыравçă-çке эпĕ,
Пурин çинчен те тӳррĕн калакан,
Чĕрĕ чечекĕн пылне илекен.

Эсĕ хурлăх çинчен темĕн чул каласан та,
Пуçламăш-пĕтмĕш çинчен темĕн чул
пуç ватсан та,
Халĕ эсĕ вунпиллĕкре çеç теетĕп пурĕпĕр.
Савăнпа та сунатăп сана
Ахаль этеме юратмашкăн.
Вăл этем çĕрпеле пĕлĕте юратать —
Çĕрпе пĕлĕт çинчен
Рифмăласа е рифмăламасăр
Юптарса çырнинчен хытăрах.

Чăнах та, савăнаттăм саншăн,
Мĕн-ма тесен — юратакан кăна
Этем ятне илтмешкĕн тивĕçлĕ.

* * *

Ах, мĕн тери пиртен кулаттăр,
Чунтан сивлеттĕрччĕ пире!
Тӳлек сăвăпалах пит паттăр
Эпир питленĕччĕ сире.
Эпир çапах та улшăнмастпăр,
Сире савса, шанса тăрса
Сăвапла кăмăл упраса,
Тупа тунисене манмастпăр...
Ĕлĕкхиллех ансат çул-йĕр,
Вĕрет-ха пурнăç шăплăхра та.
Кулăсăрах, ĕненмĕсĕр,
Ан вулăсăр сăввăмăра та:
Çĕр айĕнче шавла-шавла
Шыв юхнине унта хайланă...

Астăвăр, Тютчев та каланă:
*Ан чĕн, сыхлан, пытар шала*
*Чи хаклă шухăш-кăмăла...*

* * *

Ҫаллех — яш чухнехи хавал,
Вĕрет вăй-хал, эс чăрсăр майсăр...
Анчах татах телейсĕр халь,
Пурнан вăл ҫитессе шанмасăр!

Ирттер инкеклĕ вăхăта,
Терт витĕр вирхĕн куҫкĕретĕн.
Ун витĕр чĕррĕн тухăн та —
Ҫу саншăн туйăнĕ кĕтретĕн.

Пĕлсе эс тăрăн ӳлĕмрен:
Иккен телей кирлех пулман-мĕн,
Шух ĕмĕте ҫитме пӳрмен,
Тĕрекĕ нумая пыман-мĕн.

Хайлавҫă савнăҫĕн курки
Кĕҫех тулать те тăкăнать-мĕн,
Сан мар халь, пирĕн — пур пекки,
Тĕнчепеле йăлт ҫыхăнать-мĕн.

Йăл кулăпа ҫеҫ хăш чухне
Асилĕн, ҫĕн куҫпа хакланăн,
Эпир телей тесе шутланă
Черчен ачалăх ĕмĕтне!

* * *

Илемлĕччĕ, çамрăкчĕ вăл ун чухне,
Мадонна пекех вăл тасаччĕ.
Йăл çутă тĕс витнĕччĕ ун сăн-питне.
Чĕрем шар! çурлас пек тапатчĕ!..

Сенкер инçет евĕр вăл канлĕ-тӳлек,
Çывран акăш пек курăнатчĕ.
Кичемлĕх, тен, пуснăччĕ-и, кам пĕлет...
Чĕрем шар! çурлас пек тапатчĕ!..

Юрлатчĕ-и вăл юратуллă юрра —
Вăл манăн ăшра та янратчĕ.
Анчах вылямастчĕ-ха юнĕ унра...
Чĕрем шар! çурлас пек тапатчĕ...

* * *

Каллех чĕрем кӳтет шăнса,
Сивве пăхмасăрах утатăп,
Пĕччен юратăва упратăп,
Çын çук çĕрте çынна шанса.

Анчах та çиллĕм çĕкленет,
Чунра вăй илчĕ курайманлăх.
Хисеплĕх е сума суманлăх
Çын кусĕнче ӳкерĕнет?

Йыхăрччăрин: Поэт, тăхта!
Сан хӳхĕм хăтлăха килесчĕ!
Çук! Шар сивве тӳссех вилесчĕ!
Çук — хăтлăх! Çук вăл — канăç та!

* * *

Тулта йаскăн çумăр та пылчăк,
Пĕлместĕн — мĕн-ма хуйхăрас.
Кичемлĕх, йĕрессĕм те килчĕ,
Мĕскер ĕçлесе вăй хурас?

Сăлтавсăр сĕм-тунсăх хупларĕ,
Тухмаççĕ пуçран шухăшсем.
Тен, хăйă чĕлсе купалар-и?
Лартам сăмавар, вĕретем.

Тен, чей мухмăрне чĕртнĕ майăн
Мăрт-март эп калаçăп санпа —
Тен, эс ыйхунтан уçăлайăн,
Сасартăк çитен савнăçпа.

Атя тахçанхи пек ĕçер-и?
Пурнар ерипен те кал-кал!
Вара, тен, хуйха та вĕçтерĕ
Чейпе хĕрӳленнĕ хавал!

* * *

Таранрах пытарса тăпра витĕç,
Курăк ÿсĕ, ăна хупласа.
Инçетрен те çÿлтен сасă çитĕ:
Çумăр çăвĕ таçта чашласа.

Нимĕскер те тек ыйтмĕ çын чунĕ,
Сирмĕ хăйĕн тÿлек ыйхине.
Лăпкă сасă хускатĕ кĕр кунĕ,
Вĕркĕш сасă ярать çуркунне.

Хуйхă çук: ĕнтĕркке сасă ĕнтĕ
Палăртмасть савнăçа, тунсăха.
Юрату, уйрăлу тертĕнчен те
Пулĕ тупăк хăми сыхлăха.

Васкама кирлĕ мар. Хăтлă вырăн.
Хак пама та май пур мĕнпурне —
Пурăнуçăн йĕркесĕр те ыррăн
Çын ăс-халĕ мĕн-мĕн курнине.

# СЕРГЕЙ ЕСЕНИН
# (1895—1925)

* * *

*Шура йăмăкăма*

Çĕр çинче эп иртсе çӳрекен çеç,
Ăшшăн алă сĕлтсемччĕ мана.
Кĕрхи уйăх шевли те пикенчĕ
Лăпкаса йăпатмашкăн чуна.

Пуçласа уйăхпа ăшăнатăп,
Пуçласа ӳт-пĕве сулхăн мар.
Çĕнĕрен чĕрĕлетĕп, шанатăп
Иртсе кайнă юратăвăма.

Хăйăрпа тăварланнă тӳремлĕх,
Тепĕрин хĕрлĕхне таптани,
Хăшпĕрне илентернĕ кичемлĕх —
Акă мĕншĕн ман ăшăм çунни.

Çавăнпа шухăш çук пытармашкăн
Пĕччен мар, уйрăм мар — иккĕне
Пĕр пек кăмăллăн, ăшшăн, ачашшăн
Çĕршыва юратма тивнине.

## «ПЕРСИ ҪĔВВИСЕМ» ЯРĂМРАН

* * *

Тин лăпланчĕ тахçанхи суранăм —
Минреместĕп ĕнтĕ эрехпе.
Эп хама сиплетĕп Тегеранăн
Ытарми сенкер чечекĕпе.

Чыслă кăтартасшăн чайханаçă
Вырăс умĕнче чайханине —
Хĕрлĕ чей сĕнмешкĕн çунатланчĕ
Шурă эрехне лартас чухне.

Эй, хуçа, ан хыпăн сăйламашкăн,
Сан пахчу тулли ĕлккен çеçке.
Ахаль мар мана куç хĕсрĕ ăшшăн,
Чатăрне сирсе, пĕр чиперкке.

Йытăсем пек сăнчăрта тытмаççĕ
Хӳхĕм хĕрсене халь Раççейре.
Чуптуса илмех укçа сунмаççĕ —
Вĕренсе çитен çĕçĕсĕрех.

Ку хĕре — утти çăп-çăмăл, çепĕç,
Шуçăмран вăл илнĕ хăй сăнне —
Хороссан шальне парнелĕп эпĕ.
Парăттăм Ширазăн кавирне.

Çăрарах, хуçа, чей тултарсам-и,
Ҫăмăл çук паян суйса тăма.
Хамшăн халь сăмах тытатăп хам эп,
Саншăн хал çитмест сăмах тытма.

Эс ан хыпăн алăкна сăнасшăн,
Тупăнĕ пахчун та калитке...
Ахаль мар мана куç хĕсрĕ ăшшăн,
Чатăрне сирсе, пĕр чиперкке.

* * *

Ыйтрӑм, улшуҫа курса, паян эп
(Тенкӗшӗн илет вӑл ҫур туман):
Лалӑна персла епле-ши манӑн
«Чун савни» тесе чӗнес чунтан?

Ыйтрӑм, улшуҫа курса, паян эп
Лӗп ҫилтен, Ван хумӗнчен хуллен:
Лалӑна епле калас-ши манӑн,
«Чуптӑвар» тесе чӗнес килсен?

Ыйтрӑм улшуҫран татах паян эп,
Пусарса именчӗклӗ чуна:
Лалӑна епле калас-ши манӑн,
«Чунӑмҫӑм» тесе чӗнес ӑна?

Хай кӗскен каларӗ, тӑнласассӑн:
Қалаҫмаҫҫӗ юратни ҫинчен,
Юратсан — сывлаҫҫӗ вӑрттӑн, ассӑн,
Қуҫунта ҫунать ахах-мерчен.

Чуптӑву ҫинчен мӗнех пӗлтерӗ?—
Унӑн ячӗ ҫук масарсенче.
Қӗлчечек шӑрши вӑл калӗ, терӗ,
Ҫеҫки пек ҫунса тута ҫинче.

Юрату-и ҫӑмӑллӑх ҫеҫ парӗ?—
Пурте пулӗ: савнӑҫ та синкер.
«Чунӑмҫӑм» тесе чӗнме пултарӗ
Чатӑра сирсе ыйвӑтнӑскер.

* * *

Шаганэ, Шаганэм-Шаганэ!
Эп хам çурçĕр çынни пулнăран-ши,
Уй-хире асилме хапăл саншăн,—
Уйăх айĕн ыраш мĕнлине.
Шаганэ, Шаганэм-Шаганэ!

Эп хам çурçĕр çынни пулнăран-ши,
Çурçĕр уйăхĕ-ши пысăкран —
Чаплă пултăр Шираз тем таран,
Çитмĕ анлă Рязань çĕрне маншăн.
Эп хам çурçĕр çынни пулнăран-ши?

Уй-хире асилме хапăл саншăн.
Ырашран илтĕм çӳç ылтăнне.
Явала хăть ăна пӳрнӳне —
Ыратни ним те туйăнмĕ маншăн.
Уй-хире асилме хапăл саншăн.

Уйăх айĕн ыраш мĕнлине
Ман кăтра çӳçĕмрен тавçăр эсĕ.
Ăшшăн кул та шӳтле, ыр пикеçĕм,
Аса çеç ан илтер ун чухне
Уйăх айĕн ыраш мĕнлине.

Шаганэ, Шаганэм-Шаганэ!
Çурçĕрте те пурнать хӳхĕм хĕр,
Сăнĕпе сан пекех вăл çав тер.
Тен, мана вăл илет пуль асне...
Шаганэ, Шаганэм-Шаганэ.

* * *

Ҫӑкӑртан кӑна Саади
Савнӑ, терӗн, чуптума.
Тархаслатӑп: эс тӑхта та —
Хал ҫитерӗп хӑнӑхма.

Ҫоранра каланӑ, терӗн:
Таваӑру — тӑшмансене!
Рязанье-ҫке эп ӳсейрӗм,
Пӗлмӗп вӑл сӑмахсене.

Эс юрларӑн: «Ефрат урлӑ
Ҫӗлчечек хитре хӗртен».
Урӑх юрӑ хывӑп-юрлӑп,
Тусӑмҫӑм, пуйма тивсен.

Пӗтӗм чечеке эп ҫулӑп.
Савнӑттӑм ҫеҫ ун чухне —
Пуринчен те хӳхӗм пулӗ
Манӑн савнӑ Шаганэ.

Ан калаҫ халал ҫинчен тек,
Пурӑнмастӑп вӗсемпе.
Сӑваҫ юнӗ чун-чӗрен-тӗк,
Чуптӑватӑп сӑваҫ пек.

* * *

Пулайман нихҫан та Босфорта эп,
Ун ҫинчен ан ыйт манран, пикем.
Тинӗс куртӑм санӑн куҫунта эп —
Йӑлкӑшаҫҫӗ кӑн-кӑвак хумсем.

Багдада караванпа кайман эп,
Унталла хна-пурçăн турттарман.
Хӳхĕм пĕвӳпе пуç тай, тăванăм,
Ирĕк пар арку çинче канма.

Е каллех-и кĕмĕн ӳкĕте те —
Эс илтесшĕн пулмăн хам çинчен:
Инçетри «Раççей» ятра çӳретĕп
Эпĕ чаплă сăвăç шутĕнче.

Асăмра ялан янрать хуткупăс,
Уйăх çутатать те йыт вĕрет.
Тен, çитсе курма та кăмăл тупăн
Инçетри сенкер-сенкер çĕре?

Эп килмен кичемлĕхрен тарасшăн —
Курăнмасăр чĕнтĕн те савса,
Ыталарĕç ик çунат пек ăшшăн
Акăш-аллусем ыталаса.

Чун тахçантанпах шыратчĕ канăç,
Пурпĕр ылханмастăп иртнине.
Хӳхĕм çĕршыву хавасла санăн,—
Савăнтар, кăтарт ун илемне.

Ман хуткупăс тунсăхне сӳнтер эс,
Ӳсĕрт эсĕ çĕнĕ илемпе,
Манăçа юлайтăр çурçĕр хĕрĕ,
Ассăн ан сывлам асилнипе.

Босфора курман пулин çитсе эп,
Қалăттăм сăмах тупса, пикем.
Пурĕпĕр куçу сан тинĕс тейĕн,
Пăлханаççĕ кăн-кăвак хумсем.

* * *

Сывлăш сенкер те тăп-тăрă,
Йăвă чечеклĕх тӳремĕ.
Утăн та утăн çул тăрăх —
Сар пушхире çул çитеймĕ.
Сывлăш сенкер те тăп-тăрă.

Сан умăнта ешĕл улăх,
Улăх сад пек çеçкеленнĕ.
Е тупалак-и тĕл пулĕ —
Эс чуптумашкăн кукленĕн.
Сан умăнта ешĕл улăх.

Шăппăн сас-чӳ çеç хускалтăр —
Çепĕç юрлать пек Саади.
Хĕр куçĕнче çуталать-и
Уйăх шевли йăлтăр-ялтăр —
Çепĕç юрлать пек Саади.

Хĕр сассипе кам йăпанмĕ —
Флейта калаççĕ пуль тейĕн.
Çук çухатуллă телейĕ
Хĕрĕн хĕрӳллĕ ытамĕн,
Флейта сасси çеç илтейĕн.

Акă вăл ырнă çӳревçĕн
Кĕтнĕ пехечĕ те пиле!
Сывлăш чечеклĕх шăршиллĕ —
Канлĕн сывлатăп пĕр вĕçĕм.
Сывлăш чечеклĕх шăршиллĕ.

* * *

Алăкĕсем капăр Хороссанăн,
Сапнă кĕлчечек вĕсен умне.
Эп унти чипер хĕре кусланă.
Алăкĕсем капăр Хороссанăн,
Уçасси пулмарĕ вĕсене.

Сахал мар ман аллăмра вăй-халăм,
Ылтăн-пăхăр тĕсĕ — çӳçĕмре.
Хĕр сасси илемлĕ те янравлă.
Сахал мар ман аллăмра вăй-халăм,
Алăк уçаймарăм пурпĕрех.

Кӳрес çук хăюлăх ним усси те.
Мĕншĕн, камшăн юрлăп малашне —
Шагăн çук пулсан кĕвĕçесси те,
Уçайман-тăк унăн алăкне?
Кӳрес çук хăюлăх ним усси те.

Раççее çитмешкĕн вăхăт ман.
Перси! Эп санран-и уйрăлатăп?
Ĕмĕрлĕх ăсанăп-ши кунтан?
Аттесен çĕрне чунтан саватăп,
Раççее çитмешкĕн вăхăт ман.

Сывă пул, пикем, сыв пул, чиперĕм,
Уçайман пулин эп алăкна,
Эс илемлĕ тунсăх парнелерĕн
Сурсĕрте юрра хывма сана.
Сывă пул, пикем, сыв пул, чиперĕм!

* * *

Фирдусин сенкер-сенкер çĕршывĕ,
Манмăн эсĕ вырăс кăмăлне,
Вырăс пулчĕ сан чунушăн çывăх,
Эс ăнлантăн унăн тунсăхне,
Фирдусин сенкер-сенкер çĕршывĕ.

Эс илемлĕ, эп пĕлетĕп, Перси.
Çурта пек çунаççĕ чечексем,
Савнă Раççее асилтереççĕ
Чĕрлĕх шывĕ сыпнă чечексем.
Эс илемлĕ, эп пĕлетĕп, Перси.

Юлашки хут эпĕ ку енче
Ырă шăршăпа ӳсĕрĕлетĕп.
Шаганэм, юлатăн эс инçе,
Юлашки хут сассуна илтетĕп
Йывăр уйрăлу самантĕнче.

Эп кайран сана-и манса кайăп?
Хамăн çапкаланчăк пурнăçра —
Çывăх çын-и, ют-и — эп калайăп
Сан çинчен кирек кама вăра.
Ĕмĕрех сана асра тытайăп.

Эп шикленмĕп сан инкекӳнтен.
Халĕ сых ятне, салхуллăскер, эп
Юрласа парам-и Русь çинчен?
Юрласа асил мана, чиперĕм,—
Илтĕн сассăма ун кĕввинче.

* * *

Мăшăр акăш — хĕрĕн аллисем
Çÿçĕм ылтăнне чăмса кĕреççĕ.
Юрату çинчен мĕнпур сынсем
Ĕмĕр пĕр юрра çеç кĕвĕлеççĕ.

Эпĕ те юрлаттăм ĕлĕкрех,
Халĕ те çавнах юрлатăп эпĕ.
Сассăм çавăнпа витĕмлĕрех,
Çавăнпа сăмахăм витĕр çепĕç.

Çын чĕри, этем чунтан савсан,
Ылтăн чăмăркки пулса юлайĕ.
Ăшăнаймĕ юрă нихăçан
Пурпĕр Тегеран уйăхĕ айĕн.

Мĕн курма-ши тивĕ ÿлĕмрен —
Шага вутĕнче-ши çунса пĕтĕп,
Ян юрлас кунсем иртейнĕрен
Ватлăх май-и йывăр эншĕх кĕтĕ?

Хăйне май утти чĕрĕ чунсен:
Хăшĕ куçшăн ырă, хăш—хăлхашăн.
Перс юрра ăста пĕлеймесен,
Çуратман ăна Шираз таврашĕ.

Ман çинчен вара сăмахласамăр
Халăх хушшинче эсир çапла:
Юрлĕччĕ татах та вăл асамлăн,
Пĕтрĕ мăшăр акăша пулах.

* * *

«Мĕншĕн уйăх савăк мар пĕрре те,
Мĕншĕн тĕксĕм сăнĕ Хороссанăн?
Қалăн, эп тăван хирте çӳретĕп,
Қалăн, таврана тĕтре хупланă».

Кипарис ĕретĕнчен эп, чунăм,
Ыйтрăм çакăн пек — хыпар пуласлăн.
Çук, хурав пулмарĕ, Лала, унăн,
Вăл пуçне çĕклерĕ çеç мăнаçлăн.

«Мĕншĕн уйăх çутатать кичеммĕн?»—
Терĕм чечеке, сада тухсассăн.
Чечексем коларĕç: «Тимлесем эс,
Кĕлчечек салхуллă сас тусассăн».

Кĕлчечек ак чăштăр сасă пачĕ,
Кĕлчечек ак шăппăн сасă турĕ:
«Шаганэ сан урăх каччăпаччĕ,
Шаганэ сан урăха чуптурĕ.»

Пăшăлтатрĕ: «Вырăс вăл сисеймĕ...
Чун юрлать, вăл ирĕке иленнĕ...»
Уйăх çавăнпа пăхать кичеммĕн,
Уйăх çавăнпа халь тĕссĕрленнĕ.

Тиврĕ ултавпа инкек-асаплă
Кунсене çав тер нумай чăтмашкăн.
. . . . . . . . . . . .
Пурпĕр ĕмĕр чунăмшăн сăваплă
Çĕр çинче сенкер каçа курмашкăн.

* * *

Çĕрĕ-шывĕ савнăçлă, сенкер,
Юрăшăн ята эп янăскер.
Тинĕс çилĕ, эс пулсам тӳлек —
Шăпчăк шăлана чĕнет, итле.

Лешĕ авăнса, итле, пуç тайрĕ —
Шăпчăк юррине юрла пуçларĕ.
Тинĕс çилĕ, эс пулсам тӳлек —
Шăпчăк шăлана чĕнет, итле.

Эс ача-ха, ан тавлаш, ара,
Сăвăç мар-и эпĕ те вара?
Тинĕс çилĕ, эс пулсам тӳлек,
Шăпчăк шăлана чĕнет, итле.

Хаклă Гели, эс мана каçар,
Чечексем тĕл пулĕç сахал мар,
Йышлăн авăнĕç, умна пуç тайĕç,
Пĕри çеç сана чунтан савайĕ.

Савăнар эппин пĕрле чунтан
Çакăн пек хитре çĕрсем пуртан.
Тинĕс çилĕ, эс пулсам тӳлек,
Шăпчăк шăлана чĕнет, итле.

Çĕрĕ-шывĕ савнăçлă, сенкер.
Юрăшăн, ан тив, эп ним шеллеменскер—
Гелишĕн лăс йывăç хӳттинче
Шăпчăк ытамне кĕрет чечек.

## КОНСТАНТЫ ГАЛЧИНЬСКИЙ (1905—1953)

### РЕҪВИЕМ?

Ячӗ ку сăввăн ултавлă.
Вилтăприсем кăшкăраççӗ:
«Лăпкăн çывраймăпăр эпӗр.
Ҫӗрлӗ-и вăрçă тавраш —
ыйхăмăр пирӗн килеймӗ.
Вăрçă кӗрлевӗ пӗтмесӗр,
эсӗр киле килмесӗр,
кӗртмӗ пире Ахерон* та.
Пулăшӗ каçăн сӗмӗ.
Уйăх çап-çут çуннă тапхăр
эпӗр, вилсен, пулă евӗр,
ишетпӗр-тухатпăр,
килӗрсене те кӗретпӗр,
е ыратан сыв ӳте те.
Вилӗм пуçлать ашкăнмашкăн,
çил пек лăскать йӗкӗте те.
Виткӗчсенчен те туртатпăр:
мӗншӗн ларатăр тухмасăр!
Эсӗр пире сивлесессӗн,
эпӗр ылханăпăр майсăр.
Пирӗн ята-и яратăр,
шиклӗх сире хăратать-и —
эсӗр те лăпкăн пурнаймăр,
чир ачăра аптăратӗ.
Итлӗр, Европа халăхӗ,

---

* Ахерон—авалхи грексен мифӗсенче тамăкри «ӗмӗрхи асап юханшывӗн» ятне пӗлтерет, вилнӗ çынсен чунӗ ун урлă каçмалла.

ак мĕн каласшăн Варшава:
иккĕленӳллĕ ан пулăр,
нишлĕх вăл — пурнăç таптавĕ.

Паттăршăн пулĕ пуçкăшăль,
тăнăçлăх йывăррăн килĕ.
Çĕр чăмăрне шуйхантарчĕ
вилнĕ çынсенĕн йыхравĕ.
Эпĕр сиртен уйрăлмастпăр,
сирĕншĕн пурте хускалчĕ.
Сталинград та Варшава
çут çăлтăр евĕр çуталчĕ.

Пире кирлĕ мар симфони,
хӳхлевĕр-реквиемĕр.
Вăхăт вĕсемшĕн пит хĕсĕк,
чĕррисшĕн вăй кӳрсемĕр!
Савнă çĕр чăмăрĕ çиййĕн
çитĕ пуриншĕн те савнăç:
Аслă Реквием — вилнĕ çынсемшĕн,
чĕрĕ çынсемшĕн —
чăн-чăн Аслă Канăç».

# БОРИС РУЧЬЕВ
# (1913—1973)

## «ÇУТ ХĔВЕЛĔМ» ЯРĂМРАН

1

Аттемĕр çурчĕ пек халаллă
пире куç виçейми Раççей —
ахаль-и пирĕн хытнă алă
мĕн ачаран савать ĕçе?
Тайга юрне ашса ĕшеннĕ,
кăларнă-и ту рудине —
йăлтах ку хамăр çакăр тенĕ
эпир хыснамăр çакăрне.
Е çын илтмен çĕрте çӳренĕ,
çарти пек пурăнса, стройра,—
чыс вырăнне хурса ĕçленĕ
хура ĕçе йывăрлăхра.
Хĕрарăм ăшшине курмасăр,
тар юхтарса кайласемпе,
вилес-мĕнрен те хăрамасăр,
чул тусемпе, вăрмансемпе,
туртса тек — пурнаймасăр унсăр,
ир уйрăлса кăвайтсенчен,
çӳреттĕмĕр тискер те чунсăр
çуралнă çĕрĕмĕр çинче.
Чул ту катса çул хывнă — иртнĕ,
чĕнмен — ӳксен те юр çине,
кашни ту каççинех-çке çитнĕ,
шав виçнĕ çурçĕр çыранне.
Хĕлле те ĕçлесе тарланă,
кӳтсе чĕтренĕ шăннăран.
Çук, кая мар — эпир ăнланнă —
ĕç вăрçăри паттăрлăхран.

Эпир кунта тӳссе ирттернӗ
пӗрремӗш хут ҫул кӑвайтне
поляр асса кайсан тискеррӗн
чӗртмешкӗн йывӑр килнине.
Анланнӑ,— ҫак асап-нушашӑн,
ан тив, ылханӑн чи малтан,
анчах та ҫӑмӑл мар савмашкӑн
тӑван ҫӗршывӑма чунтан.
Анланнӑ — алари ӗҫсемшӗн,
кирлех пулсассӑн малашне,
чӑн паттӑр вилӗмпе вилмешкӗн
татах та хӗн пулассине.

...Анчах та эсӗ инҫетре те,
пӗрремӗш хут халь хуйхӑра,
сӑвапла тунсӑхна пӗрре те
ан илсемехчӗ йывӑра.
Палаткӑсем, полярӑн ҫулӗ —
умнах ҫывхарччӑр — кӑвайтсем...

Салтакӑн арӑмӗ пек пул эс —
ҫаплаччӗ пирӗн аннесем.
Раҫҫейӗн чиккинче ир-каҫлӑн
сых тӑнӑ чух аттемӗрсем
хуйха-уйрӑлӑва мӑнаҫлӑн
тӳссе ирттернӗччӗ вӗсем.

2

Ҫуллен пӗрле тек ватӑлса пырсассӑн,
тек ҫума-ҫумӑн пурӑннӑ пулсан,
сан илемӳ ҫинчен сана юрасшӑн,
паллах, эп суйнӑ пулӑттӑм паян.
Эс юлӑттӑнччӗ ҫитсӑ платье вӗҫҫӗн,
килти туфлисемпе ман асӑма;

юнашарах пурăннăран пĕр вĕçĕм
чĕнсе çухатмăттăм канăçăма.
Вара, поляр хĕл сиввине курмасăр,
çитмесĕр тайгана, тусем çине,
нихçан пĕлессĕм çукчĕ эпĕ, ахăр,
эс маншăн çут хĕвел пек пулнине.
Ыратиччен шăнса кӳтет-и алă
е ăшăнма çук чух вут умĕнче —
сана кăна упрарăм савăнмалăх
эс инçетрен тĕс кайнă куççенче.
Татах илемлĕрех, татах ачашшăн
ума эс чĕрĕ чун пек çывхаран,
килен анне пек канăççăр та ăшшăн,
хĕр куç харшийĕ пĕркеленнĕ сан.
Çĕрле тăман пӳрте юрпа витет-и,
хĕвел тухмасть-и ак паян каллех —
эп ыйхă витĕр сассуна илтетĕп:
«Вăран, ыр тусăм. Çутăлса килет...»
Пĕрле çӳрерĕн ту йăранĕ урлă,
юханшывсем çинче пăр тăрăх эс.
Пуç тĕлĕнче — эп ывăнса çитсессĕн —
ыр йăмăк пек ларса сĕм каççерен,
сывлăшупа çеç чуптăваттăн эсĕ,
эс хураллаттăн ыйхăма ирччен.
Е чунăмри вăй-хал пĕте пуçларĕ,
поляр урса тăратчĕ-и ялан —
эп сансăр — пĕр самант та пурăнмарăм,
эп сансăран — пĕр утăм та туман.
Ан тив, сан çук портретупа киленмĕп,
ан тив, пӳлĕмӳнте пулаймăп эп,
савсан та урăхла эс — эп ĕненмĕп,
сана, çук, никама та памăп эп.
Ан тив, хĕл уртăрин асар-писеррĕн —
сӳнме пĕлмен чух эс куçăмсенче,
мана эс чун пек çывăх чух, чиперĕм,
йăлтах тӳссе ирттерĕп çĕр çинче.

3

Халăхри пек каласассăн,
тĕкĕнсех пырать кунçул:
хучĕ çук — табак пулсассăн,
хучĕ пур — табакĕ çук.
Çурçĕрте пĕрре, мăнтарăн,
инçе тинĕс çулĕпе
ишнĕ май эп туртаймарăм
çумăмра хут çуккипе.
Çулĕ вăрăм. Ун çинчех тек —
куçăм ман табак çинчех...
Çырусем сан юриех пек
пулчĕç аллăм айĕнче.
Санăн савнăç, санăн тунсăх —
йăлт тĕрленнĕ хут çине.
Тек вула-вула астунă
пулăттăм халь вĕсене...
Ак туртатăп шав, пĕрмай эп —
ирĕн-каçăн, çук чару.
Уямасăр туртнă майăн
юлчĕ юлашки çыру.
Кӳрентерчĕ, тарăхтарчĕ —
калăн, манăн инкеке,
шăппăн килчĕ, çумăн ларчĕ
тĕтĕм витĕр сан мĕлке.
Мĕн тесе чĕнме пултартăм
е — хăйса пăхма куçран?
Енчĕкĕм ăшне пытартăм
юлашки хутна санран.
Çил тулашрĕ-и хаяррăн,
çулăм хыпрĕ-и çула —
çулсерен ăна упрарăм,
утрăм эп унпа мала.
Çумăртан та хӳтĕлеттĕм,
забойра — чул айĕнче.

Хăш чухне чиксе çӳреттĕм
шăрпăкăн йĕннийĕнче.
Чи сăваплă та халаллă
юлашки укçам пекех,
вăрласран çĕрле сăх алă
пытараттăм инçерех.
Йĕркисем ун шупкаланнă,
пăнчисем те ĕнтĕ çук.
Çĕмĕрлес пекех асамлăн
туйăнатчĕ вăл хăш чух.
Утрăм-утрăм çул-çул тăрăх
эп вăрман сĕмлĕхĕнче.
Ман сухал та ĕнтĕ вăрăм,
пурĕпĕр вăл — упранчех.
Тунсăх кăшт пусса илсессĕн,
лăпланатăп — вуласан.
«Чуптăватăп...»— тенĕ эсĕ,
аяла вара: «Эп сан...»

4

Забоя ирпе çул тытнă майăн
куç ӳкет сенкер сăрт-ту çĕрне,
чарăнса тăратăп сăнама эп
чуншăн хаклă çын пурнан ене.
Те сисместĕп хам мĕн тунине те,
яланхи пек манăçа путсан,
тусăмçăм курас пекех чĕнетĕп:
— Ырă кун, çут шурăмпуçăм ман!..—
Çак самант иртет те, шуххăнраххăн
çил сирсе ярать куç ăшшине,
лумпала киркка та çăмăлраххăн
пусарах парать пек хул çине.
Çил çинчех кĕпе хывса хуратăп,
типĕтме ерçместĕп пит тарне,
кунĕпех чĕнмесĕр эп кататăп

ĕмĕрхи шăн çурçĕрĕн чулне,
шав кататăп — юн хĕрсе илмелĕх;
вăхăт нимĕн сисĕнми иртмелĕх;
çывăрмалăх ӳсĕр пек кайран;
уйрăлу кунне çапса салатнăн,—
сывлăш çаварса пĕрре хăватлăн,
йăлт сирсе ярас пек самантран;
çав сенкер çĕре çитсе ӳкесшĕн
çулсăрах утма забойсенче;
парăнтарнă йышлă забойсемшĕн;
аташма вĕсен хисепĕнче;
ыттисем курсассăн каламалăх —
тĕлĕнсе ман çак тӳсĕмлĕхрен:
— Эс мĕнле çак,
пурте сан ал майлă,
çĕнеймест тепри —
эс çĕнеен.
Мĕн вăйпа хĕн кунсене тӳсейрĕн,
ту-шыв урлă каçрăн сахал мар,
мĕн вăйпа эс паттăр пек çӳрерĕн?—
ху сăнран пачах та паттăр мар...—
Ун чухне эп чи малтан,
тунмастăп,
курайман та йывăр ĕç тытса,
забойран хăпарасса сунмастăм,
кĕтнĕ çеç чĕрем çурăласса.
Ахăр, çав сенкер, сăрт-туллă çĕрĕм
пулăшрĕ мана çак ыр ĕçре —
сăпкара чух вăй пилленĕскерĕм,
шăмшакпа пуçра чĕртсе тĕрек.
Тавтапуç — тата мана çĕклерĕ
пĕр хĕрарăм вată Уралтан —
хăй вăл нимĕн чул та пĕлменскерĕм
хăй мĕн чухлĕ вăйлине нихçан!

5

Юмахсем Раççейре чăн пулаççĕ...
Ĕçпеле çухату пысăкран
çирĕпрех те илемлĕ юлать çын,
вутра пиçнĕ салтак пек, кайран.

Хĕвел пек хĕрсене çухатсан та,
çĕр витсен те чун пек туссене,
эс, ан тив, шăнăрна хытарсан та,
курайманăн ыр канăç кунне.

Эс, ан тив, килессе те сунмарăн
ăнтăлса тайгари чăтлăхран,
пиç суран сана канлĕх памарĕ,
çирĕн кедр майри цингаран.

Эс, ан тив,— тухма çук çил-тăман-тăк —
выçăпа лап ÿксе çĕр çине,
виличчен те манмаслăх ăнлантăн
ĕçлесе тупнă чĕлĕн хакне.

Эс, ан тив, упрама пĕлеймерĕн
чулçăсен чун лăскан ĕçĕнче
ылтăн пек аллуна та чиперрĕн:
çĕвĕпе суран çеç ун çинче.

Эс, ан тив, сив шывпа антăхсан та,—
полярти юханшыв сарăлсан,—
кĕперсем тытса тăтăн, сыхлантăн
вĕсемпе пĕрле ху та пăртан.

Эс, ан тив, çывăхраххăн куратăн
пушар чух е тăман тапрансан,
калăн, эс туссене пулăшмарăн,
калăн, тартăн сехрӳ хăпнăран.

Эс, ан тив, юр-çил витĕр те иртрĕн
полярти ĕмĕрхи сивĕре,
хăв чунна хĕвел пек илсе çитрĕн
шăнса кӳтнĕ, хал кайнă ӳтре.

Эс, ан тив, çывăхраххăн куратtăн
инçетри-инçетри кунсене —
асапран йăл илсе халь ăнкартăн
çĕнейми тăшман çук иккенне.

Тăшману çивĕч шăллă пулсан та,
куç хăрамĕ — вăл хирĕç килсен,
вăл ултавлăн çитсе тапăнсан та,
эсĕ çĕнĕн ăна пĕр-пĕччен.

Эс ăнлантăн — çук ал тăвайман ĕç,
ăс-пуçу ăнкарми ĕç те çук,
тĕллевсем чыслăнах çывăхланĕç —
тĕлĕнен хăвăнтан эс ку чух.

Эс ăнлантăн — ялан пулнă евĕр,
пулĕ савнă хĕрарăм та сан:
тăрĕ пуç вĕçĕнче анне евĕр,
йăмăку пек вăл пырĕ хыçран.

## ТУПМАЛЛИ

## САВӐСЕМ

Тупа . . . . . . . . 5
«Паян эп хам — кӗсле-гитара...» . . . . 6
Ӑн асатте . . . . . . . 7
Юлашки ҫыру . . . . . . . —
Эрине хӗрӗме . . . . . . . 9
Чӗрӗлнӗ! . . . . . . . . 10
Саксук . . . . . . . . 11
Еткер . . . . . . . . 12
Митта Ваҫлейӗн вилтӑпри умӗнче . . . 13
Раиса Федорова актрисӑна . . . . 15
Юпа мыскари . . . . . . . 17
Уйрӑлу (юмах) . . . . . . . 18
Чӗкеҫ . . . . . . . . 20
Пихампар чечекӗ . . . . . . 21
Хураҫка . . . . . . . . 22
Пилеш тататӑп . . . . . . . 23
Шеллекенсем . . . . . . . 24
Уртӑш йывӑҫ, уртӑш кайӑк . . . . 25
Ӳкӗнӳ . . . . . . . . 27
Йыхрав ярса тӑрар-и? . . . . . 28
Тӑхти тӑхӑмӗ . . . . . . . 29
«Шӑпӑр-шӑпӑр ҫумӑр хыҫҫӑн...» . . . 31
Ан хӑратсам . . . . . . . 32
«Вулатӑп йӗрсе Аттила...» . . . . . 33
Упасарри . . . . . . . . 34

«Гараж хыҫне, улах ҫӗре...» . . . . 35
«Чӗлтӗр ҫӗнӗ уйӑх...» . . . . . . 36
«Ҫӳрентертӗм ҫынна каҫарусӑр...» . . . 37
«Эс пур кунта рехет ҫитменшӗн...» . . . —
«Хупах, е ухлӗм, е вӗлтрен...» . . . . 38
«Ырӑ кӳнӗ ҫыннӑма...» . . . . . . 39
Кӗмӗл алтӑр . . . . . . . . 40
«Чечек» . . . . . . . . . 41
Чулпа хӑмла . . . . . . . . 42
Ку-ук! . . . . . . . . . 43
Чӗрӗп . . . . . . . . . 45
Ана пӑрҫи . . . . . . . . 46
«Эй, каҫсем...» . . . . . . . 47
Хӗртсурт . . . . . . . . 48
Тӗлӗкри асамат кӗперӗсем . . . . 49
Вӗлтрен яшки (шӳт) . . . . . 50
Чике мучи . . . . . . . . 51
Ват ӑшши . . . . . . . . 54
«Ҫаллех пилеш татмашкӑн вӑхӑт...» . . . 55
«Вӑштӑртатса иртет-и ҫил...» . . . . —

## ТУСЛӐХ ЯЧӖПЕ

Тӗлпулу . . . . . . . . . 56
Рене Ҫаландиа сӑвӑҫа . . . . . . 57
Ҫитӗн, туслӑх йывӑҫӗ . . . . . . 59

## ҪӖРЕҪЕ ЮРРИ ЕҪҪИПЕ

Алран ан кай! . . . . . . . 60
Асран кайми . . . . . . . . —
Пӗлӗш-тантӑш . . . . . . . . 61
Ҫӗрхи уяв . . . . . . . . 62
Пӗрле пурӑнар . . . . . . . —
Ай-яй-яй-яй . . . . . . . . 63

## САВНИ ÇЫРĂВĔСЕМ

«Айван, тĕнче ылханĕ çитнĕ пек...» . . . 64
«Нимсĕрех ăнлансам...» . . . —
«Пĕлетĕн эп сивĕнмессе...» . . . 65
«Нихăçан та калаçман...» —
«Мĕн тăвам-ши, мĕн тăвам-ши?..» . . . 66
«Тав тăватăп ыр канашшăн...» . . . . —

## ÇАРĂМСАН ПЕХИЛĔ

Уçăп Енипе ыттисем . . . . . . . 67
Қăлмайăр . . . . . . . . . 69
Упамсар . . . . . . . . 71
Чăвашъел . . . . . . 72
Сĕнче хули . . . . . . . 74
Çарăмсан . . . . . . . . 76

# ҚУÇАРУСЕМ

## ДУ ФУ

Ылтăн çамрăксене . . . . . . 77
Пăлан . . . . . . . . 79
Попугай . . . . . . . . 80

## АБУ АЛИ ИБН СИНА

Рубайсем . . . . . . . 81

## АБУЛЬ ҚАСИМ ФИРДОУСИ

Ăс-хакăла мухтаса каланă сăмах («Патшасен кĕнекинчен») . . . . . . . . 82

## ЛИ ЦИН-ЧЖАО

Хризантема . . . . . . . . . 84
«Шаннă лотос чуна савăнтармĕ...» . . . 85

## ИОГАНН ВОЛЬФГАНГ ГЕТЕ

Маргарита монологĕ («Фауст» трагедирен) . 86

## РОБЕРТ БЕРНС

«Эс мана пăрахрăн, Джеми...» . . . 88
Юрă . . . . . 89
«Эс — тăмана» тесе мана...» . . . —

## МИХАЙ ВЕРЕШМАРТИ

Қил-çуртсăрскер . . . . . . . 90
Ёмĕт . . . . . . . . . . 92

## ЭЛИАС ЛЕНРОТ

## ҪАЛЕВАЛА

Юрăçсен ăмăртăвĕ . . . . . 93
Лоухи Сампо шырать . . . . 95

## ЯН КАСПРОВИЧ

«Чухăнсен кĕнекинчен» . . . . 97

## АЛЕКСАНДР БЛОК

«Ах, мĕн тери йĕри-тавра...» . . . . . 100
«Эпир пĕрлеччĕ санпала...» . . . . . —
Фабрика . . . . . . . . . 101
Сăпка юрри . . . . . . . . 102
«Пурнăç карапĕ...» . . . . . . . 103
«Юр айĕнче питĕ тертлĕччĕ...» . . . 104

«Пăшăлтатрĕ асамлă тута...» . . . . 104
Русь . . . . . . . . . 105
«Сăнна чип-чиперех паллатăп...» . . . 107
«Пехил сана, ман иртнĕ кунăм...» . . . 108
«Ҫун мар-ҫке кун, ҫул мар-ҫке ҫулĕ...» . . 109
Ҫеремлĕхре . . . . . . . —
«Эсĕ манăн сукмакăм ҫинче...» . . . 110
«Ах, мĕн тери пиртен кулаттăр...» . . . 111
«Ҫаллех — яш чухнехи хавал...» . . . 112
«Илемлĕччĕ, ҫамрăкчĕ вăл ун чухне...» . . 113
«Ҫаллех чĕрем кӳтет шăнса...» . . . . —
«Тулта йăскăн ҫумăр та пылчăк...» . . . 114
«Тарăнрах пытарса тăпра витĕҫ...» . . . 115

## СЕРГЕЙ ЕСЕНИН

«Ҫĕр ҫинче эп иртсе ҫӳрекен ҫеҫ...» . . . 116
«Перси кĕввисем» ярăмран
«Тин лăпланчĕ тахҫанхи суранăм...» . . . —
«Ыйтрăм, улшуҫа курса, паян эп...» . . . 118
«Шаганэ, Шаганэм-Шаганэ!..» . . . 119
«Кăкăртан кăна Саади...» . . . . 120
«Пулайман нихҫан та Босфорта эп...» . . —
«Сывлăш сенкер те тăп-тăрă...» . . . 122
«Алăкĕсем капăр Хороссанăн...» . . . 123
«Фирдусин сенкер-сенкер ҫĕршывĕ...» . . 124
«Мăшăр акăш — хĕрĕн аллисем...» . . . 125
«Мĕншĕн уйăх савăк мар пĕрре те...» . . 126
«Ҫĕрĕ-шывĕ савнăҫлă, сенкер...» . . . 127

## ҪОНСТАНТЫ ГАЛЧИНЬСКИЙ

Реквием? . . . . . . . . 128

## БОРИС РУЧЬЕВ

### «ÇУТ ХĔВЕЛĔМ» ЯРĂМРАН


«Аттемĕр çурчĕ пек халаллă...» . . . . 130
«Çуллен пĕрле тек ватăлса пырсассăн...» . 131
«Халăхри пек каласассăн...» . . . . . 133
«Забоя ирпе çул тытнă майăн...» . . . . 134
«Юмахсем Раççейре чăн пулаççĕ...» . . . 136

Геннадий Федорович Юмарт (Трофимов)

**СЕРЕБРЯНЫЙ КОВШ**

*Стихи и переводы*

На чувашском языке

Редактор **В. О. Максимов**
Художник **Э. М. Юрьев**
Художественный редактор **З. И. Чернова**
Технический редактор **Л. К. Егорова, Н. В. Васильева**
Корректор **Л. К. Егорова**

ИБ 2067

Сдано в набор 12.10.87. Подписано к печати 16.02.88. НТ 19028. Формат 70×90 1/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 5,26. Усл. кр.-отт. 5,41. Учетно-изд. л. 5,13. Тираж 1000 экз. Заказ № 3619. Изд. № 49. Цена 60 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.